24-мĕш çул тухать. Хакĕ 15 пус.

1941
НОЯБРЬ
20
КĔҪНЕРНИКУН
274 (7339) №

ЧĂВАШ КОММУНИ

Пĕтĕм тăнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН. ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАҪАЧĔ.

Вырăнти удобренисене ытларах пухса хатĕрлер!

Çĕр — колхозлă пурнăçăн иксĕлми çăлкуçĕ. Вăл хăйне тĕрĕс те тĕплĕн пăхса тăма ыйтать, ăна ытларах удобренисем парса çемçетмелле. Лайăх сухаласа, удобренисемпе çемçетсе тăвăçлă тырпул парать, колхозăн пуянлăхне татах та ытларах ӳстерет.

Пирĕн çĕршывра çĕре колхозсене усă курма ĕмĕрлĕхех çирĕплетсе панă. Колхозлă ялăн малта пыракан çыннисем, пуян техникăпа тата агрономи наукин çитĕнĕвĕсемпе усă курса, тăпран тухăçлăхне вăйлатсах пыраççĕ. Колхозсем çĕре пысăккăн хакланине, ăна тĕп. лĕн, юратса пăхса тăнине темĕн чухлĕ примерсемпе çирĕплетсе пама пулать. Вĕсем халиччен «юрăхсăр» тесе шутлаттăр çĕрсене сухаласа удобренисем парса çемçетеççĕ, çав çĕр çинче тухăçлă тырпул туса илеççĕ.

Тăпра тухăçлăхне ӳстерсе пымалли условисенчен пĕри вăл вырăнти удобренисемпе минеральнăй удобренисене çитĕклĕ таран хатĕрлени тата вĕсемпе туллин усă курни пулать. Научнăй учрежденисем даннăйĕсем тата вăйлă тырпул мастерĕсен опычĕсем кăтартса панă тăрăх, пĕр тонна тислĕк тырпул тухăçлăхне центнера яхăн ӳстерет. Кĕрхи тырăсем акакан пĕр гектар çĕр çине 20 тонна тислĕк тăкни гектар çинче 3—10 центнер ытларах тĕштирĕ туса илме май парать.

Тислĕке кирек мĕнле тăпра та тирке. се тăмасть. Мĕншĕн тесен тислĕк çинче ялхуçалăх культурисене ӳссе çитĕнме кирлĕ çимĕрсем пурте пур. Кунсăр пуçне тислĕкпе пĕрле органически япаласем те тăпрана йышлăн хывăнаççĕ. Çакă вара тăпран тухăçлăхне ӳстерес тата унăн структурине лайăхлатас тĕлĕшпе пысăк усă парать.

Малта пыракан колхозсем тислĕкпе вырăнти ытти удобренисене ытларах пухас тата вĕсене тĕрĕс шăхса усраса, вĕсемпе туллин усă курас ĕç çине тимлĕн çăвăрăнса пăхаççĕ. Вĕсем уйхире çулран-çул ытларах та ытларах тислĕкпе вырăнти удобренисем кăлараççĕ. Çĕмĕрле районĕнчи колхозсем 1941 çул хушшинче кăна уйхире 35.616 тонна тислĕк тата ытти вырăнти удобренисем кăларнă. Çĕмĕрле районĕ кăçал вăтам шутпа кашни гектартан 14 центнера яхăн тĕштирĕ туса илнĕ.

Елчĕк районĕнчи «Осоавиахим», «Ново-Ищеряково», Ленин ячĕпе тăракан колхозсем кăçал вăтам шутпа кашни гектартан 100—120 пăт тĕштирĕ туса илнĕ. Çак колхозсем çулсеренех пысăк тухăçлă тырпул туса илнинчен тĕлĕнмелли çук. Вĕсем тислĕке тата ытти удобренисене тĕмиçе пиншер тонна уя кăларaççĕ. Удобренисене тирпейлĕ пăхса усраççĕ, вĕсемпе пĕлсе усă курaççĕ.

Вăрнар районĕнчи Кольцовка колхозĕ кашни çулах пысăк тухăçлă тырпул туса илет, республикăра малти вырăнта тăрать. Кăçал колхоз вăтам шутпа гектартан 190 пăт тĕштирĕ туса илнĕ. Кунта вырăнти удобренисене ытларах пухса усă курас тĕлĕшпе тăрăшса ĕçлеççĕ. Вырăнти удобренисене усăсăр сая ямаççĕ.

1942 çулта агротехника енĕпе хĕлле тумалли ĕçсен планĕ тăрăх, пирĕн республикăри колхозсен тĕштирăсем акмалли лаптăксем çине икĕ миллион тонна тислĕк, 800 пин тонна торф кăлармалла. 80 пин центнер кĕл, 50 пин центнер кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ, 13.500 тонна известь хатĕрлемелле. Çапла пирĕн колхозсем умĕнче пысăк ĕçсем тăраççĕ. Вырăнти удобренисемшĕн кĕрешĕве халĕ пуçарса ямалла. Кашни колхозăн, бригадăн, звенон хăйĕн умне çакăн пек задача лартмалла: çулталăк хушшинче кашни лаша пуçне 9 тоннăран кая мар, майракаллă шултра вылăх пуçне 10 тонна, кашни сысна пуçне 2 тоннăран кая мар, кашни сурăхпа качака пуçне çур тонна тислĕк хатĕрлемелле.

Çавнашкалах колхозник хуçалăхĕсем те хăйсен хуçалăхĕсенче тислĕк, кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ тата кĕл пухса хатĕрлеме пултараççĕ. Кашни колхозăн фермисенче, колхозниксен хуçалăхĕсенче вырăнти удобренисем хатĕрлемелли çирĕп план пулмалла.

Вырăнти удобренисене тĕрĕс пăхса усрамалла. Тислĕке, кĕле тата ытти удобренисене усрама ятарласа тунă вырăнсем пулмалла.

Тислĕкпе вырăнти удобренисем тăпра тухăçлăхне, çавна май тырпул тухăçлăхне ӳстерес тĕлĕшпе пысăк вырăн йышăнса тăраççĕ пулсан та, республикăри хăшпĕр колхозсенче вырăнти удобренисем çине çителĕксĕр çавăрăнса пăхаççĕ. Тислĕке выльăх витисем таврашĕнче е уйхирте сапаласа пăрахаççĕ. Хăшпĕр чухне уя илсе тухнă удобренисем усă курмасăрах сая каяççĕ. Хĕл вăхăтĕнче уйрăм колхозсенче кĕле урама е çырма-çатрасене кăларса тăкнине те курма пулать. Çакăн пек йĕркене малашне пулмалла мар. Çакна асра тытмалла: тислĕке тĕрĕс мар пăхса усранине пула ун çинчи паха çимĕçсем ахаллĕн типсе сывлăша нумай каяççĕ. Пĕр азот кăна 50—60 процент таран пĕтме пултарать.

Кашни колхозра вырăнти удобренисене çирĕп шута илсе пырас пулать. Кашни пĕр центнер удобрени шутра пулмалла.

Пирĕн колхозсенче вырăнти удобренисене ытларах пухма пысăк майсем пур. Тислĕк ытларах пултăр тесен, общественнăлла выльăхсем вăйне кивĕ улăм тата торф тăтăшах сарса тăкни кирлĕ. Çавăн пек тума колхозниксене те кивĕ улăм е торф валеççе памалла.

Хăшпĕр колхозсенче тислĕк е вырăнти ытти удобренисене хатĕрлесе панăшăн колхозниксене ĕçкунĕ шутласа паман тĕслĕхсем те пурри палăрать. Тислĕк ӳрамалли вырăнсем тунă, тислĕке лайăх пăхса усракан тата тислĕк пухмалли плана тултарнă старший конюхсем, çавăн пекех фермăсен заведующийĕсем 20 ĕçкунĕ таран илме тивĕçлĕ. Колхоза панă пĕр тонна тислĕкшĕн колхозник хуçалăхне 2 — 3 ĕçкунĕ, колхоза панă пĕр центнер кăлтăшĕн 1—1,5 ĕçкунĕ, пĕр центнер кайăк-кĕшĕк тислĕкĕшĕн 2—2,5 ĕçкунĕ шутласа памалла. Вырăнти удобренисем хатĕрлесе панăшăн колхозниксене ĕçкунĕ шутласа пани, паллах, удобренисене ытларах пухса хатĕрлеме май парать. Çавăнта кашни колхозра ĕçкунĕсене вăхăтра тата тĕрĕс шутласа памалла.

Кашни бригадăн, звенон тата колхозникăн хăйне вырăнти удобренисем хатĕрлеме çирĕплетсе панă плана ирттерсе тултарассишĕн кĕрешмелле. Мĕншĕн тесен удобренисемшĕн кĕрешни—вăйлă тырпулшăн кĕрешни пулать.

ВКП(б) XVIII съезчĕ В. Молотов юлташ докладĕ тăрăх ĕнтĕлнĕ резолюцире: «Колхозсемпе совхозсенче органически тата минеральнăй удобренисен тĕрĕс системипе усă курассине ĕçе кĕртмелле, тислĕке тата вырăнти ытти удобренисене йĕркеллĕ сыхласа усраса, вĕсемпе усă курасси çине уйрăмах çавăрăнса пăхмалла, минеральнăй удобренисем сая каяссине пĕтермелле», тенĕ. Тислĕкпе вырăнти удобренисене пухса, пăхса усрас тĕлĕшпе кашни колхозра кăтартуллă йĕркелĕк пулма тивĕçлĕ.

Сталин юлташ Мускав Совечĕн чаплă ларăвĕнче тунă доклад пирĕн республикăри колхозниксен производствăлла активлăхне татах та ытларах çĕклерĕ. Нимĕн иккĕленмелли те çук, аслă çулпуç çăмахĕпе хавхаланнă колхозсем тата колхозниксемпе колхозницăсем вырăнти удобренисем хатĕрлемелли плана ăнăçлăн тултарĕç, вĕсене лайăх пăхса усрĕç тата пĕлсе усă курĕç.

Бронепоезд тума

СЕНТĔРВĂРРИ. (Телефонпа). «Портной» артельри комсомолецсемпе комсомолкăсем хăйсен пухăвĕнче Октябрьски районри «Большевик» промартельри комсомолецсемпе çамрăксем «Комсомол Чувашии» бронепоезд тума укçа-тенкĕ пухасси çинчен чĕнсе каланине сӳтсе-явăрç. Красноармеец арăмĕ Дубова юлташ «Большевик» промартель çамрăкĕсем чĕнсе каланине ырласа, «Комсомол Чувашии» бронепоезда тума пĕр кунхи ĕçукçине пама пулчĕ.

— Эпир,—терĕ вăл,—тылра хамăрăн пĕрĕм вăя хурса ĕçленисĕр пуçне, Чăваш комсомолĕн ячĕпе хăватлă бронепоезд туса тăван Хĕрлĕ Çара татах та ытларах пулăшăпăр. Манăн упăшка фронтра çапăçать, эпĕ тылра унăн ятне ямастăп. Хĕрлĕ Çара пулăшма пĕтĕм вăя паратăп.

Çавăн пекех пухура ытти комсомолецсем те хĕрӳллĕн тухса каланĕç, вĕсем хăшиех хăйсен пĕркунхи ĕçукçине пама пулчĕç. Çав кунах артельри комсомолецсем хушшинче «Комсомол Чувашии» бронепоезда тума 147 тенкĕ те 80 пус укçа пухрĕç. Кун хыççăн артельри мĕнпур рабочисен пĕрлешĕллĕ пухăвĕ пулса иртрĕ. Рабочисем пурте хăйсен пĕр кунхи ĕçукçине бронепоезд тунă çĕре пама пулчĕç.

Çавнашкалах райисполкомра та партипе комсомол организацисен уçă пухăвĕ пулса иртрĕ. Унта Сталин юлташ Мускав Совечĕн чаплă ларăвĕнче тунă доклада сӳтсе-явăрç. Пуху конкретнăй решени ыйтăнчĕ. Райисполкомра ĕçлекенсем пурте «Комсомол Чувашии» бронепоезда тума хăйсен пĕр кунхи ĕçукçине пама пулчĕç. Кунта çак ĕç валли 453 тенкĕ укçа пухнă та ĕнтĕ.

Октябрьски районри «Большевик» промартель çамрăкĕсем чĕнсе каланине районри ытти предприятисемпе учрежденисенче те сӳтсе-явăрç. Пур çĕрте те ĕçсыннисем бронепоезд тума хăйсен пĕр кунхи е икĕ кунхи ĕçукçийĕсене пама пуласçĕ.

Г. РЯБИН.

Совет Информаци Бюровĕнчен

Ноябрĕн 18-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерӳ

Ноябрĕн 18-мĕшĕнче пирĕн войскăсем пур фронтсенче те противника хирĕç сапăçусем туса пынă. Калинин, Волоколамск участокĕсенче тата Кăнтăр-Хĕвеланăç франчĕн участокĕсенчен пĕринче уйрăмах хаяр сапăçусем пулнă. Пирĕн войскăсем нимĕçсен техникипе чĕрĕ вăйне пĕтерсе пырса, противник атакисене сире-сире янă.

Ноябрĕн 17-мĕшĕнче нимĕçсенне 18 самолет пĕтерсе тăкнă. Пирĕн 4 самолет пĕтнĕ.

* * *

Хĕвеланăçпе Кăнтăр франчĕсенче кĕрешекен пирĕн авиаци часĕсем ноябрĕн 17-мĕшĕнче нимĕçсенне 10 танк, пехота ларса пыракан тата боеприпассем тиенĕ 60 автомашинăна ытла, 60 лав ытла, 4 полевой оруди тата противник пехотине пĕр батальона çити пĕтерсе тăкнă.

* * *

Хĕвеланăç фронтĕнчи участоксенчен пĕрринче кĕрешекен пирĕн часть никĕçсене чылай пысăк сухатусем кӳнĕ. Ноябрĕн 16-мĕшпе 17-мĕшĕнче пулнă сапăçусенче пирĕн войскăсем тăшманăнне 16 танк, 14 оруди, минометсен темиçе батарейине, 30 автомашина, пехота ларса пыракан тата çар грузĕ тиенĕ 10 лава пĕтерсе тăкнă. Çак трофейĕсене: 6 оруди, 27 станковăй тата ручной пулемет, темиçе миномет тата нимĕçсен ытти тĕрлĕ хĕрпăналне тытса илнĕ.

* * *

Старший лейтенант Котов юлташ ертсе пыракан истребительсен отрячĕ нимĕç танкĕсен пысăк колоннине хăй патне сывăха пыма панă та тăшманăн 8 машинине вут тивретсе янă. Танксен истребителĕ Крупиков красноармеец сапăçусенчен пĕринче нимĕçсенне 3 танк пĕтерсе тăкнă. Челановпа Темлинов кĕçĕн лейтенантсем ертсе пыракан истребительсен отрячĕсем çĕрле засада тунă. Гранатăсемпе тата вут хыпаракан бутылкăсемпе персе вĕсем противникăнне 2 танк тата 2 автомашина вут тивертсе янă.

* * *

Нимĕçсен фашистла çарĕн тылĕнче совет патриочĕсем çĕмĕрсе çӳрени Германи командованине ытларах та ытларах хăратать. Вĕсене пур çĕрте те халăх курайманнине захватчиксем хăйсем те ирĕксĕрех йышăнаççĕ. Шпионажпа саботажа тата ытти хирĕç кĕрешесси çинчен кăларнă приказра фашистсен Эберград генералĕ çакна палла тăвать: «нимĕçсен çарне хирĕç кĕрешес ĕçре вырăссем нумай тĕрлĕ майсем шухăшласа кăларнă. Çавăнпа та тылри организацисен пĕрремĕш задачи—действующи çарăн тылĕнче кирек мĕнле пăлхану пулассине те сирсе ярасси пулса тăрать. Противникăн вăрттăн пропаганди тата партизансен ĕçĕсем вырăнти халăх хушшинче тата вăйлăрах пăлханусем кăларса яма пултараççĕ. Пирĕн войскăсем хушшинче çав пăлхануллă шухăшсене ниепле те сарма памалла мар». Фашистла генерал гражданла халăх хушшинчи кăмăла кайман элементсене пĕтерсе тăкма, çын çинчен элеклесе кăтартма майлă условисем туса хума хушать. Партизансенчен хăраса тăракан генерал çул çинче тĕл пулакан пур лавсене те, çавăн пекех çуран сынсене те, пурнăçлăн ытлах хресчен хĕрарăмĕсене, лайăхрах ухтарма, вĕсен хутаççисене, корзинкисене тĕплĕн тĕрĕслеме, вĕсем ăçтан тата мĕн тума кайни çинчен ыйтса пĕлме хушать. Анчах та Германи çарĕн командованийĕн приказĕсем те, фашистла ирсĕрсен юнлă ĕçĕсем те нимĕç оккупанчĕсене пĕр хăрамасăр пĕтерсе пыракан совет патриочĕсен иксĕлми хăюлăхне чарса лартаймĕç. Фашистсем оккупациленĕ районсенче нимĕç захватчикĕсене хирĕç кĕрешес ĕç çĕнĕ вăйпа сарăлса пырать

* * *

Киргиз ССР-ĕн Джалалабад облаçĕнчи ĕçсыннисем пысăк хавхаланупа ĕçлесе, фашистла интервентсене пĕтерсе тăкма Хĕрлĕ Çара пулăшаççĕ. Колхозсем вăйлă пулнă çĕрмамăкне пуçтараççĕ. Сузак районĕнче колхозри звеньевойсем Сали Алимов, Сабиткул Мамарасу, Левинахан Исмайлов т. ыт. те кашни гектар çинче 100-шер центнер е унтан та ытларах çĕрмамăк туса илнĕ. Государствăна çĕрмамăк памалли плана область срокченех тултарнă. Вăтам Азири Кок-Янгак рудникăн «Капитальная» ятлă пысăк штольняри шахтерсем çĕршыва çулталăк программинчен ирттерсе пиншер тонна çĕркамăк пачĕç.

Сталин юлташ докладĕ çине ответлесе облаçри колхозниксем государствăна çĕрмамăк памалли плана 10 процент ирттерсе тултарма пулчĕç, «Капитальная» штольняри шахтерсем планран ирттерсе вуншар пин тонна çĕркамăк пама пулчĕç.

Ноябрĕн 19-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерӳ

Октябрĕн 19-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн войскăсем пур фронтсенче те противника хирĕç сапăçнă.

* * *

Хĕвеланăç фрончĕн участокĕсенчен пĕрринче кĕрешекен пирĕн чассем икĕ кун хушшинчи сапăçусенче нимĕçсенне 65 танк тата бронемашинăсем, 35 оруди пĕтерсе тăкнă. Фронтăн тепĕр участокĕнче пирĕн чассем çав вăхăт хушшинчех нимĕçсенне 56 оруди, 80 пулемет, миномет тата 6 батарейине пĕтерсе тăкнă тата противникăн салтакĕсемпе офицерĕсене 2.500 çынна çити вĕлерсе пĕтернĕ.

* * *

Лейтенантсем Кривоспицкий, Сафонов тата красноармеец Гаврилов юлташсем противника хирĕç штыкпа тăрса сапăçса фашистсен икĕ офицерне пĕтерсе тăкнă тата нимĕçсен пысăк группине хăваласа янă. Хăюллă та пысăк тăрăх боецсем противникăнне пĕр ручной пулемет, 10 винтовка тата темиçе пин патрон тытса илнĕ.

* * *

Калинин облаçĕнчи партизансем фашистла захватчиксене хирĕç геройла кĕрешеççĕ. Нимĕçсене фронтăн Калинин участокĕ патне резервсем илсе пыма партизансен нумай йышлă отрячĕсем пур енчен те чăрмантарса тăраççĕ. Н-ски заводăн директорĕ Б. юлташ пуç пулса тăракан отряд боеприпассем турттарса пыракан грузовиксен колонни çине тата горючи тултарнă автоцистернăсем çине хăюллăн пырса тапăннă. Колоннăна сыхласа пыракан броневика партизансем граната сыхисем пăрахса çĕмĕрнĕ. Партизансемпе тăшман хуралĕ хушшинче пуçланса кайнă çапăçура пирĕн хăюллă патриотсем нимĕçсен 25 салтакне вĕлерсе пĕтернĕ. Гранатăсем тата çунакан шĕвек тултарнă бутылкăсем пыра-пыра лекнипе нимĕçсен вут хыпса илнĕ грузовикĕсем, боеприпассемпе пĕрле, взрыв пулса сирпĕннĕ. Цистернăсем çунма пуçланă. Нимĕç салтакĕсенчен пĕр пайĕ тарма хăтланкă, анчах çул çинче партизансен тепĕр отрячĕ тунă засада çине пырса тăрăннă та вĕсене партизансем пурне те пĕтерсе тăкнă. Нимĕç салтакĕсен роти çине партизансен утлă отрячĕ хастаррăн пырса тапăннă. Противник çине гранатăсем вăркăнтарса, партизансем тăшман ретĕнче паника тунă, çакăнта 55 нимĕçе вĕлерсе пĕтернĕ.

* * *

Франци патриочĕсем фашистла захватчиксене хирĕç пыракан кĕрешĕве татах та ытларах вăйлатаççĕ. Ноябрĕн малтанхи кунĕсенче, Лилль тата Рубэ хулисĕнче, нимĕç çарĕ валли ăшă пиджăрпа тумтир туса хатĕрлекен фабрикăсенче пушарсем пулнă. Пушарсене пула ăшă çипуçăн 20 пин комплекчĕ ытла пĕтнĕ. Валансьен хулинче çак кунсенче çăм склачĕсенчен пĕрне вут тĕртсе çунтарса янă, çав çăма нимĕçсем хăйсем оккупациленĕ ялсенче турттса илсе пухнă пулнă. Франçин нимĕçсемшĕн ĕçлекен фабрикисемпе заводăсенче татти-сыпписĕр стачкăсем пулса иртеççĕ. Ноябрĕн юлашки икĕ эрни хушшинче кăна Францире 200 пин рабочи ытла забастовкăна хутшăннă.

Таван çĕршыв оборонин фончĕ ӳсет

СССР Финанс Халăх Комиссариачĕн туллимар даннăйĕсем тăрăх, çак вăхăт тĕлне çĕршыв оборонин фондне хывнă укçа-тенкĕ шучĕ 868 миллион та 700 пин тенкĕ çитнĕ. Кунсăр пуçне оборона фондне ĕçсыннисем ытти халăл йышши япаласем те нумай панĕ. Вăл хисепре: 1,5 килограмм платина, 57,1 килограмм ылттăн, 2.590,3 килограмм кĕмĕл тата ютçĕршывсен валютисем, совет укçи хакĕ тăрăх, 1.479.981 тенкĕлĕх шутланаççĕ.

Çĕршыв оборонин фондне ытларах паракансем хушшинче пĕрремĕш вырăнта Мускав хули тăрать. Ун хыççăн Хабаровск крайĕ, Казах, Узбек тата Азербайджан республикисем тăраççĕ (ТАСС).

ИЕПРЕÇ. Районри ĕçсыннисем оборона фондне заем облигацийĕсем хывасси ӳссех пырать.

—Эпир оборона фондне укçан, заем облигацийĕсем хывса, пирĕн çĕршыв çине вăрă-хурахла килсе тапăннă ирсĕр тăшмана — Германи фашизмне çĕмĕрсе тăкма Хĕрлĕ Çара пулăштăпăр,— терĕç Буинскри сланец рудникĕнче ĕçлекен рабочисемпе служащисем тата инженерно-технически работниксем.

Буинскри сланец рудникĕнче ĕçлекенсем Совет Союзĕн оборона фондне 10.745 тенкĕлĕх заем облигацийĕсем хывнă. Çавăн пекех вăрман заводĕнче ĕçлекенсем те 4000 тенкĕлĕх ытла панă. Районри прокурор Ф. Сергеев юлташ 3.615 тенкĕлĕх, районри финанс отделĕн заведующийĕ Дормидонтов юлташ 1.395 тенкĕлĕх панă.

Оборонăн Государственный Комитечĕн Председательне И. В. Сталин юлташа

Тăван Сталин юлташ!

Партин Чăваш республикинчи активĕн пухăвĕ Сире, Совет Союз халăхĕсен тата хĕçпăшаллă вăйĕсен аслă çулпуçне, большевикла боевой салам ярать.

1941 çулти октябрь уявĕ кунĕсенче каланă Сирĕн пурте ăнланмалла тата витĕмлĕ сăмахăрсене пĕтĕм совет çĕршывĕ çавтери пысăк хумханупа итлерĕ. Пурăнса ирттерекен талăкăра лайăх ӳсса кăтартакан тата фашистла захватчиксене хирĕç пыракан кĕрешӳре совет халăхĕн малашнехи задачисене ӳçăн палăртса паракан сирĕн сăмахăрсем çапăçăва чĕнекен вăйлă сасă пулса социализмлă тăван çĕршывăн пур кĕтесĕсене те çитрĕç, пирĕн халăхăн ирсĕр тăшмана пуçĕпех çĕнтерес шанчăкне татах та ытларах хăватлантарса çĕклерĕç. Сирĕн чăн сăмахăрсем халăхăн çĕнĕ те халиччен нихăçан курман вăйĕсене вăратса çĕклентерчĕç, вĕсене фронтра çапăçма тата фашизма çĕнтерес ĕçе организацилеме пĕтĕçтерсе тăратрĕç. ССР Союзĕнчи халăхсен туслă тата хастарлă çемьи—отечественнăй аслă вăрçă кунĕсенче пĕрлĕхлĕ те никам çĕмĕрейми лагерь пулса тăчĕ. Эсир фронта пулăшу парассине вăйлатма чĕннине хапăл туса йышăнса, вăл хамăрăн Хĕрлĕ Çарпа Тинĕс-Çар Флотне хăйĕн вăйне шеллемесĕр пулăшса тăрать, вăл Германи империалисчĕсене çĕнтерес сехете сывхартма мĕнпур вăйĕсене пухса кĕрешет.

Чăваш республикинчи ĕçсыннисем Эсир тухса каланисем çине производствăлла çĕнĕ çĕкленӳпе ответлеççĕ. Пирĕн промышленноçăн предприятийĕсенче, транспортра, вăрман хатĕрлес ĕçре, колхозсемпе совхозсенче, промысла артелĕсенче вăрçă вăхăтĕнчи стахановецсен—двухсотниксен движенийĕ ӳссе анлăн сарăлса пырать. Совет патриочĕсем тăван çĕршыва пăлханулăн мĕн пур вăйĕсене ниепле те сарма памалла мар. Фашистла генерал граждансене халăх хушшинчи кăмăла кайман элементсене пĕтерсе тăкма, çын çинчен элеклесе кăтартма майлă условисем туса хума хушать. Партизансенчен хăраса тăракан генерал çул çинче тĕл пулакан пур лавсене те, çавăн пекех çуран сынсене те, пурнăçлăн ытлах хресчен хĕрарăмĕсене, лайăхрах ухтарма, вĕсен хутаççисене, корзинкисене тĕплĕн тĕрĕслеме, вĕсем ăçтан тата мĕн тума кайни çинчен ыйтса пĕлме хушать. Анчах та Германи çарĕн командованийĕн приказĕсем те, фашистла ирсĕрсен юнлă ĕçĕсем те нимĕç оккупанчĕсене пĕр хăрамасăр пĕтерсе пыракан совет патриочĕсен иксĕлми хăюлăхне чарса лартаймĕç. Фашистсем оккупациленĕ районсенче нимĕç захватчикĕсене хирĕç кĕрешес ĕç çĕнĕ вăйпа сарăлса пыр

Отечественнăй аслă вăрçă фрончĕсенче

Хĕвеланăç фронтĕнчи хаяр çапăçусем

ХĔВЕЛАНАÇ ФРОНЧĔ, ноябрĕн 18-мĕш. (ТАСС спец. корр.). Юлашки кунсенче пирĕн фронтăн сылтăм флангĕнче сарăлса кайнă çапăçусем вăйланса, хаярлансах пыраççĕ. Нимĕçсем кунта çĕнĕ резервсем илсе пынă. Ĕнер, иртен пуçласа, фронтăн чылай участокĕсенче нимĕçсем çĕнĕрен наступленипе пуçласа ячĕç, çапăçăва нумай танк тата пехота çарĕсене кĕртрĕç. Чĕрĕ çар вăйĕпе танксем нумай пĕтнине пахмасăрах, нимĕçсем ĕнер кунĕпех малалла кĕрсе пыма талпăнчĕç. Çапах та пысăк çухатусем тунă хыççăн кăна, каç пулас умĕн вĕсем çак участокра пирĕн чăсене хĕссе Г. тата М. ялĕсем патне çитсе тухма пултарчĕç. Халĕ çак ялсем патĕнче юнлă çапăçу пырать. Совет войскисем, тăшман хаярран хĕсе пынине чарса тăрса, унăн çарне пысăк çухатусем кӳреççĕ.

М. районĕнче пирĕн чăсем çĕнĕрен виçĕ ял тытса илчĕç, тăшман хирĕç тăнине çĕмĕрсе вĕсем çаплах малалла пыраççĕ.

Можайск тата Мало-Ярославец патĕнче пирĕн чăсем хăйсен позицийĕсене çирĕплетеççĕ, разведкăсем тăваççĕ, çаканпа пĕрлех пирĕн артиллери тăшман оборонин малти линийĕ çине персе тăрать. Пирĕн укрепленисен малти пайне пĕлес шутпа уйрăм вырăнсенчен пĕчĕк ушкăнсемпе пыра-пыра тапăннă тăшманăн темиçе атакине Говоров командирăн войскисем ăнăçлăн сире-сире ячĕç. Н. районĕнче пирĕн чăсем тăшманăнне 9 блиндаж тата 18 окоп çĕмĕрсе тăкрĕç, вăрçă хатĕрĕсене нумай тытса илчĕç.

Захаркин командирăн чăсĕсем С. тата Л. районĕнче тăшмана атакăлама чарăнман-ха. Пирĕн пехотинецсем, Т. станцине тытса илсе, С. районĕнче тăракан нимĕçсен ушкăнне тимĕр хĕскĕчпе хĕссе хучĕç.

К. пункчĕшĕн йывăр çапăçусем пыраççĕ.

Столица патне пымалли аякри вырăнсенчи юлашки çапăçура пирĕн танкистсем уйрăмăнах палăрчĕç. Танк командирĕ Дунаев лейтенант иккĕ кун хушшинче тăшман пулеметчĕсен тăватă йăвине тата тăшман пехотине взводран кая мар пĕтерсе тăкнă. К. ялĕ патĕнчи çапăçура Козловский политрук паттăрлăхпа хăюлăх примерне кăтартнă: унăн К. пункчĕ çумĕнче тăракан подразделенийĕ тăшманăн 12 огневой точкине, нимĕç салтакĕсене 180 çын ытла тата 10 автоматчика пĕтерсе тăкнă. Пирĕн войскăсем С. районĕнче контратака тунă чухне, Васильев красноармеец хăйĕн пулеметчĕпе тăшманăн темиçе станковăй пулеметчĕ персе тăнисене пусарса лартнă та нимĕçсен 20 автоматчикне пĕтернĕ.

Пастухов красноармеец тунă паттăр ĕç çинчен пĕтĕм фронта хыпар сарăлнă. Ана тăшман ДЗОТ-чĕ персе тăнине пусарса лартма хушнă, мĕншĕн тесен çав ДЗОТ-ран пени пирĕн пехотăна малалла куçма консĕрлесе тăнă пулнă. Шикĕр боец, тăшман пулеметчĕсем хытă персе тăнине пăхмасăрах, хăвăртрах вĕсен окопĕ патне шуса çитнĕ те, унта хăюллăн сиксе кĕрсе гранатăпа 7 фашиста пĕтерсе тăкнă. Чĕрĕ юлнисем, икĕ нимĕç салтакĕ, пирĕн героя хирĕç тăма пăхнă. Пастухов иккĕмĕш гранатине ывăтнă та нимĕç салтакĕсем çăвăнтах пĕтнĕ. Унтан вăл, нимĕçсен ДЗОТ-чĕ патне çитсе, ДЗОТ-ри орудисене çĕмĕрсе тăкнă, вара çак майпа пирĕн пехотăна малалла кайма çул уçса панă.

Ноябрĕн 17-мĕшпе 18-мĕшĕнче пирĕн боевой самолетсен уйрăм отрячĕсем пухăнса тăнă тăшман çарĕсем çине вĕçсе пырса бомбăсем пăрахнă, штурмлана.

И. ГРИБОВ.

Укерчĕк çинче: Совет зенитчийĕсем малти позицие кайкан çар эшелонне сыхласа пыраççĕ.

Л. ВЕЛИКЖАНИН фотоукерчĕкĕ (ТАСС фотохроники).

Нимĕçсен ăнăçсăр атакисем

ХĔВЕЛАНАÇ ФРОНЧĔ, ноябрĕн 16-мĕш. («Правда» хаçатăн спец. военкорĕ). Ĕнер ирхине Германи пехотин икĕ полкĕ 80—90 танкпа кĕрсе Волоколамск енчи пĕр участокра наступлени пуçарса янă. Кăнтăр тĕлнелле нимĕçсем виçĕ яла тытса илме пултарчĕç. Наступлени туса килекен нимĕçсене Овчинников командирăн хĕрлĕ кавалерисчĕсем атакăларĕç. Вĕсем нимĕçсене хăйсем йышăннă вырăнсенчен хăваласа кăларса, каçхине 9 сехет тĕлне виçĕ ялтан иккĕшне каялла туртса илчĕç. Волоколамск енчи тепĕр участокра та нимĕçсем атака тума хăтланса пăхрĕç, анчах вăл атакăна та пирĕн чăсем сирсе ячĕç.

Можайск енче пирĕн чăсем хăйсен позицийĕсене çирĕплетрĕç тата разведкăсем туса çӳрерĕç. Пысăк çапăçусем Наро-Фоминск районĕнче пулса пычĕç. Ноябрĕн 16-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн артиллери противник вырнаçса тăнă вырăнсем çине персе тăчĕ.

Мало-Ярославец енче çапăçакан войскăсем тăшманăн пĕр ушкăнне çапса аркатас тĕлĕшпе çине тăрсах кĕрешнĕ. Пирĕн чăсем хĕснине хирĕç противник артиллерипе минометсенчен вăйлă персе тăнă, çакнашкалах тата пирĕн войскăсем çине самолетсенчен бомбăсем пăрахнă, хăйĕн чăсĕсем патне çĕнĕ вăйсем иле-иле пынă. Çапах та пирĕн чăсем тăшмана пайтах пысăк сиен кӳчĕç, ăна каялла хăваласа ярса, Н. ялĕн пĕр пайне хăйсен аллине тытса илчĕç. Фашистсем виçĕ хутчен контратака турĕç пулин те тата татти сыпписĕрех персе тăчĕç пулин те, пирĕн чăсем Н. пункчĕн пĕр пайне хăйсен аллинчех тытса тăраççĕ. Мало-Ярославец енчи пĕр участокра кăна противник пирĕн войскăсене малтан йышăнса тăнă вырăналла хĕснĕ.

Мало-Ярославец енче çапăçакан пирĕн чăсĕнчен пĕри Германи пехотин пĕр батальонне аркатса тăкнă, танксене хирĕç пемелли 5 тупă пĕтернĕ, пĕр самолет персе антарнă, 6 станковăй пулемет, икĕ тупă, пĕр пулемет, 18 винтовка, 30 ещĕк патрон тытса илнĕ.

«Правда» хаçатра пĕлтернĕ пек, нимĕçсем Тула хулине çурçĕр енчен тата кăнтăр-хĕвелтухăç енчен çавăрса илме хăтланаççĕ. Хулан çак районĕсене противник «çурçĕр савăлне» хĕссе кĕртесшĕн. Ку вырăнсенче ноябрĕн 15-мĕшпе 16-мĕш числисенче пĕр чарăнмасăрах çапăçу пычĕ. Пирĕн войскăсем, тăшманăн малалла хирĕнсе кĕнĕ ушкăнĕсене хĕстерсе, наступлени туса пыраççĕ. Тăшман пире хирĕç питех те вăйлăн çапăçать. Вăл темиçе хутчен те контратакăсем тума хăтланса пăхрĕ. Анчах пирĕн войскăсем каç пулнă тĕле пурпĕрех хĕвеланăç еннелле малалла кайрĕç. Паян ирхине пирĕн чăсĕсем çĕнĕрен атакăсем тума пуçларĕç.

Тула хули патне пымалли ытти вырăнсенче тата хулан кăнтăр-хĕвелтухăç пайĕсенче пысăк улăнусемех пулман.

П. ЛИДОВ.

Андреев юлташăн подразделенийĕ тăшмана малалла хĕссе пырать

ЛЕНИНГРАД ФРОНЧĔ, ноябрĕн 16-мĕш. (ТАСС). Ленинград фронтĕнчи участоксенчен пĕринче çапăçакан Андреев юлташăн подразделенийĕ нимĕçсен фашистла войскисен позицийĕсене хĕсĕçсем хĕссе пырать. Артиллери вăйлă персе тăнипе усă курса, пирĕн подразделени Г. пункчĕн кăнтăрти хĕрринче йышăнса ячĕ. Фашистсем хаярлăн хирĕç тăнине çĕмĕрсе пырса, пирĕн подразделени çине тăрсах малалла каять.

Андреев юлташăн боецĕсем тĕлĕнмелле чăтăмлăх кăтартса çапăçаççĕ. Кунта пурте Заморокин командирăн пилĕк красноармеецĕ тунă паттăрла çинчен калаçаççĕ. Хăюллăн малалла ывтăнса çак пилĕк паттăр нимĕçсен окопне çĕмĕрсе кĕнĕ. Вĕсем штыкпа тăрса çапăçса фашистсен ушкăнне вĕлерсе пĕтернĕ. Тăватă красноармеец паттăрсен вилĕмĕпе вилнĕ, пилĕкмĕш—Шмелев юлташ, аманнăскер, нимĕçсен унтер-офицерĕпе хире-хирĕç тăрса юдна. Гитлер бандичĕн кăкăрĕ çинче икĕ тимĕр хĕрес пулнă. Çак урса кайнă ирсĕр аманнă красноармеец çине ывтăннă. Анчах Шмелев юлташ витĕмлĕн çапса фашист аллинчи пистолета сирпĕнтерсе янă. Гитлеровец хăраса ӳкнĕ, хĕрхенӳ ыйтма пуçланă. Шмелев юлташ унăн кăкăрĕ тĕлне штык тытса, ăна пулемет лентисемпе çавăрса сыхнă, бандит çине автоматсемпе ытти трофейăсем тиенĕ те ăна хăйĕн чăсĕ вырнаçса тăнă çĕре илсе килнĕ.

Пирĕн артиллерин ĕçĕсем çинчен пехотинецсем пит мухтаса калаçаççĕ. Артиллеристсен Хĕрлĕ Ялав орденĕ илнĕ II-ски подразделенийĕнчи батарейăсем ывăр орудисенчен хăватлăн персе тăшманăн ДЗОТ-чĕсене аркатаççĕ, нимĕçсен çар пурлăхĕпе боеприпассен склачĕсене сывлăша сирпĕтеççĕ. Катунов лейтенант батарейин тăшмана лаптăк вĕрентсе илчĕ. Противникăн пĕр группи юханшыв урлă каçма тăнă пулнă. Фашистсен пехоти пĕр çĕре пуçтарăнине çурсанах, Катунов юлташ хăй батарейин расчечĕсене переправа çине пеме хушрĕ. Пирĕн артиллери залпĕсем нимĕçсен малти групписене шăп юханшыв варринче çĕмĕрме пуçларĕç. Тăшманăн çакăнта вунпăр салтакĕ пĕтнĕ, вăл ирĕксĕрех каялла чакнă.

Пирĕн çĕр çинчи чăссене малтанхи пекех авиаци активлăн пулăшса тăрать. Горскипе Сандалов юлташсен авиаподразделенийĕсенчи бомбардировщиксемпе штурмовиксем фашистсен укрепленийĕсене нумай çĕрте çапа-çапа аркатрĕç.

А. ВИНОГРАДОВ.
Е. КАПЛАНСКИЙ.

Рокоссовскин чăсĕсем тăшмана çĕмĕреççĕ

Рокоссовскин юлташăн чăсĕсем çапăçусем пыраççĕ. Панин командирăн чăсĕ, тăшман минометсемпе пулеметсенчен пĕр чарăнмасăр вăйлăн персе тăнине пăхмасăрах, хăйĕн рубежне пиллĕкмĕш кун çирĕплĕн тытса тăрать. Фашистсем тăтăшах наступлени тума хăтланса пăхаççĕ, анчах вĕсем кашнинчех арканса каяççĕ. Совет воинĕсем тăшман атакисене геройла сире-сире пăрахаççĕ. Тепликов командирăн подразделенийĕ йышăнса тăракан участокра кăна тăшман пысăк çухатусем тӳссе пирĕн оборонăна савăлланса кĕме пултарнă, анчах ăна унтан çийĕнчех каялла хăваласа кăларнă.

Çав операцире пирĕн артиллеристсем уйрăмах палăрчĕç. Çапăçăвăн йывăр тапхăрĕнче Мандрыченко лейтенант оборонăн малти хĕррине тухнă, тăшман вăйлă вут-çулăм тăкнине пăхмасăрах, батарейăран персе тăнă. Совет орудийĕсем тĕл персе тивретсе, тăшманăн огневой точкисене пĕрин хыççăн тепринне стройран кăларнă. Батарея хушшинчи сыхăну ăнсăртран татăлнă. Мандрыченко, пĕр минутăлăха чарăнса тăмасăр, провод çуммипе малалла шунă. Иĕри тавра пулясем шăхăрнă, тăпра татăкĕсем çӳлелле сирпĕннĕ, минăсем çурăлнă. Провод татăлнă вырăне тупсан, Мандрыченко ăна юсанă тата хăйĕн вырăнне каялла тавăрăннă. Хăйсен командирĕн хăюллăх ĕçĕпе хавхаланса, пур боецсем те паттăррăн та хăюллăн çапăçнă. Тăшман вăйлăн персе тăнине пăхмасăрах, отделени командирĕ Гуляй сăнаса тăма лайăх вырăна йышăнса, мĕн çапăçу пĕтичченех унта пулнă. Гуськов, Дубровский тата Федоров разведчиксем тăшман миномечĕсен батарейи ăста вырнаçнине палăртнă. Вĕсем пĕлтернĕ тăрăх артиллеристсем темиçе хутчен пенипе çав батарейăна пĕтерсе тăкнă. Питех те пысăк çухату тӳссе фашистсем каялла чакнă. Пирĕнсем тăшманăнне автоматсем тата ытти тĕрлĕ хăçпăшалсем, хаклă документсемпе çырусем нумай тытса илнĕ.

Çапăçусенче Панасеев тата Петров сержантсен расчечĕсенчи артиллеристсем уйрăмах палăрнă. Çав орудисен наводчикĕсем Воронцов тата Алкимаев юлташсем хăвăрт та тĕрĕс ĕçленĕ. Пулеметчик Поляков тăшмал çине пĕр чарăнмасăр персе тăнă. Шелбоганов пулеметчик белофинсене 20 çын ытла пĕтерсе тăкнă.

Карели фрончĕ

Карели фрончĕн чылай участокĕсенче темиçе кун хушши ĕнтĕ вăйлă çапăçусем пыраççĕ. Панин командирăн чăсĕ, тăшман минометсемпе пулеметсенчен пĕр чарăнмасăр вăйлăн персе тăнине пăхмасăрах, хăйĕн рубежне пиллĕкмĕш кун çирĕплĕн тытса тăрать. Фашистсем тăтăшах наступлени тума хăтланса пăхаççĕ, анчах вĕсем кашнинчех арканса каяççĕ. Совет воинĕсем тăшман атакисене геройла сире-сире пăрахаççĕ. Тепликов командирăн подразделенийĕ йышăнса тăракан участокра кăна тăшман пысăк çухатусем тӳссе пирĕн оборонăна савăлланса кĕме пултарнă, анчах ăна унтан çийĕнчех каялла хăваласа кăларнă.

Çав операцире пирĕн артиллеристсем уйрăмах палăрчĕç. Çапăçăвăн йывăр тапхăрĕнче Мандрыченко лейтенант оборонăн малти хĕррине тухнă, тăшман вăйлă вут-çулăм тăкнине пăхмасăрах, батарейăран персе тăнă. Совет орудийĕсем тĕл персе тивретсе, тăшманăн огневой точкисене пĕрин хыççăн тепринне стройран кăларнă. Батарея хушшинчи сыхăну ăнсăртран татăлнă. Мандрыченко, пĕр минутăлăха чарăнса тăмасăр, провод çуммипе малалла шунă. Иĕри тавра пулясем шăхăрнă, тăпра татăкĕсем çӳлелле сирпĕннĕ, минăсем çурăлнă. Провод татăлнă вырăне тупсан, Мандрыченко ăна юсанă тата хăйĕн вырăнне каялла тавăрăннă. Хăйсен командирĕн хăюллăх ĕçĕпе хавхаланса, пур боецсем те паттăррăн та хăюллăн çапăçнă. Тăшман вăйлăн персе тăнине пăхмасăрах, отделени командирĕ Гуляй сăнаса тăма лайăх вырăна йышăнса, мĕн çапăçу пĕтичченех унта пулнă. Гуськов, Дубровский тата Федоров разведчиксем тăшман миномечĕсен батарейи ăста вырнаçнине палăртнă. Вĕсем пĕлтернĕ тăрăх артиллеристсем темиçе хутчен пенипе çав батарейăна пĕтерсе тăкнă. Питех те пысăк çухату тӳссе фашистсем каялла чакнă. Пирĕнсем тăшманăнне автоматсем тата ытти тĕрлĕ хăçпăшалсем, хаклă документсемпе çырусем нумай тытса илнĕ.

Çапăçусенче Панасеев тата Петров сержантсен расчечĕсенчи артиллеристсем уйрăмах палăрнă. Çав орудисен наводчикĕсем Воронцов тата Алкимаев юлташсем хăвăрт та тĕрĕс ĕçленĕ. Пулеметчик Поляков тăшмал çине пĕр чарăнмасăр персе тăнă. Шелбоганов пулеметчик белофинсене 20 çын ытла пĕтерсе тăкнă.

Фронтăн Н-ски енче тăшман мĕнле пулсан та М. станци патне пырасшăн. Чернух командирăн чăсĕ кунта противника питех те, пысăк çухату тӳстернĕ. Голованов майорăн подразделенийĕ хăюллă маневр туса ирттернĕ. Каçхи сĕмлĕхпе усă курса подразделени тăшман батальонĕн тылне кĕрсе кайнă та, ăна коммуникацинчен татса уйăрнă. Çутăлас чухне çапăçу пуçланнă, вăл темиçе сехет хушши пынă. Çапăçу фашистла батальона çĕмĕрсе тăкнипе вĕçленнĕ. Çав çапăçура боецсем, командирсемпе политработниксем тĕлĕнмелле геройлăх кăтартнă. Штык вĕççĕн атака тунă вăхăтра мина татăкĕ красноармеец Ворожихин винтовкине аллинчен ыткăнтарса янă. Боец çухалса кайман, вăл хăвăрт пуртă ярса тытнă, ун патне пыракан икĕ белофина касса вĕлернĕ.

Миномечник Пушкин геройла кĕрешнĕ. Минăсем пĕтсе çитнĕ хыççăн, хăюллă боец миномета йăтса тăшмана хирĕç кайнă. Минометпа сыltăмалла та, сулахаялла та çапса фашистсене 5 çын таран пĕтерсе тăкнă.

Белофинсем хăйсен вăйĕн пĕр пайне пулăççен лодкисемпе кӳлĕн тепĕр çыранне каçарма хăтланса тăкнă. Пирĕн автоматчиксен группи шурлăхсемпе вăрмансем витĕр 10 километрлă поход туса, çыран патнех шуса пынă та ишсе килекен лодкăсем çине вăйлăн пеме пуçланă. 20 лодкăна яхăн таран заливра путнă. Белофинсен салтакĕсем 300 çын унта хăйсене валли вилĕм тупнă. Çав çапăçура Голованов подразделенийĕ тăшманăн икĕ ротине тата батальон штабне çĕмĕрсе тăкнă. Тытса илнĕ трофейăсем хушшинче икĕ ывăр оруди, тенксене хирĕç пемелли пĕр тупă, 4 радиостанци, боеприпассем тиенĕ икĕ автомашина пур.

Пирĕн авиаци çĕр çинчи войскăсемпе таччăн çыхăнса ĕçлет. Рудонин подполковникăн авиачăсĕнчи летчиксем тăшман позицийĕсем тата коммуникацийĕсем çине бомбăсем пăрахма виçĕ кун хушшинче кăна 120 хутчен сывлăша вĕçсе хăпарнă.

Совет Союзĕн Геройĕ Белоусов подразделенийĕ фашистла войскăсене темиçе хутчен те вăйлăн пыра-пыра çапнă.

Нумаях пулмасть çав подразделенири пилĕк штурмовик О. районĕнчи çул çинче тăшманăн 50 грузовикран тăракан автоколонни пынине асăрхаса илнĕ. Фашистсем машинăсем çинчен сиксе анма та пултарайман, хăюллă соколсем бомбăсем пăрахнă, пулеметсенчен вăйлăн персе тăнă. Тăшманăнне 10 машинăран кая мар салтакĕсемпе пĕрлех пĕтерсе тăкнă, нумайăшне сиенленĕ. Пĕр сехет иртнĕ хыççăн тăшман колонни çине истребительсемпе пĕрле тăватă штурмовик вĕçсе пынă. Фашистсенне татах пехотăпа пĕрле 10 машина пĕтерсе тăкнă. Çав кунах Белоусов подразделенийĕнчи летчиксем çар грузĕсем тиенĕ тата тепĕр ултă машинăна пĕтерсе тăкнă. Икĕ кун иртсен пилĕк штурмовик фронта каякан фашистла транспортсем çине вĕçсе пырса тапăлнă. Тăшман пехотине икĕ взвод таран пĕтерсе тăкнă, 15 автомашинăна сиенленĕ. Çул тăрăх çӳрессине чылай вăхăтлăха чарса лартнă. (ТАСС).

Йăшă тумтирсем пухасси вăйланчĕ

Оборонăн Государственный Комитечĕн Председателĕ И. В. Сталин юлташ Мускав Совечĕн чаплă ларăвĕнче тунă доклада Сăкăт ялсоветне (Калининскин р.) кĕрекен колхозсенче колхозниксен пухăвĕсенче сӳтсе-явнă. Сталин юлташ докладне сӳтсе-явнă хыççăн колхозсенче производствăллă çĕнĕ çĕкленӳ вăйланса пырать. Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли йăшă тумтирсем, Хĕрлĕ Çар валли пахча-çимĕçсем типĕтсе парасси вăйланчĕ.

Сăкăтри Буденный ячĕпе тăракан колхозра Сталин юлташ докладне сӳтсе явнă хыççăн, колхозниксемпе колхозницăсем 4—5 кун хушшинче Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли 6 мăшăр çăмата, 4 мăшăр çăм чăлха, 8 мăшăр çăмран сыхнă перчатка, 3 мулаххай, 5 алшăлли, кусемсĕр пуçне 27 тир, 11 килограмм çăм панă.

«Хĕрлĕ çăлтăр» колхозра çулпуç докладне сӳтсе-явнăранпа пахча-çимĕç. сем типĕтесси татах та вăйланчĕ. Юлашки кунсенче кăна ялсовета кĕрекен колхозсем виçĕ пăт сухан, пĕрер центнера яхăн çĕрулми тата кишĕр типĕтсе панă.

Г. МАТВЕЕВ.

Сталин юлташ лартнă задачăсене хăвăрт пурнăçа кĕртсе пырар!

Хĕрлĕ лавсем

ИШЛЕЙ. Сталин юлташ Мускав Совечĕн чаплă ларăвĕнче тунă доклад районри ĕççыннисене çĕршыв оборонине тĕреклетме тата ытларах мобилизацилерĕ. Районри колхозсенче декабрĕн 10-мĕш тĕлне аван çапса пĕтересшĕн кĕрешеççĕ. «Самолет», Карл Маркс ячĕпе тăракан, «Автогигант», «Мировой Октябрь» колхозсенче ирхине 2 сехетрен пуçласа каç пулса çитиччен аван çапаççĕ. «Самолет» колхоз ыраш çапса пĕтерчĕ.

Аван çапас ĕç вăйланнине пула государствăна тырă тата натуроплата тырри парас ĕç те лайăхланчĕ. Чурачăк ялсоветĕнчи Карл Маркс тата Ленин ячĕпе тăракан колхозсенче ноябрĕн 10-мĕшпе 15-мĕш хушшинче кулленех тырă леçме хĕрлĕ лавсем кайса тăнă.

Калинин, Молотов ячĕпе тăракан тата «Правда» колхозсенчен 40 лав кайнă. Чылай колхозсем оборона фондне тырă, аш-какай, пахча-çимĕçсем пама тытăнчĕç. Ярапайкассинчи «Коммунизм» колхоз членĕсем 3 лавпа оборона фондне тырă тата 80 чăх леçсе пачĕç.

Çулпуç докладне сӳтсе-явнă хыççăн, кашни колхозрах фронта пулăшассине вăйлатса пыраççĕ. Пахча-çимĕçсем типĕтес тĕлĕшпе районра малта пыракан «Мотор» колхоз çак кунсенче 134 килограмм çĕрулми типĕтсе леçсе пачĕ. Юлашки кунсенче кăна колхозсем 26 центнер типĕтнĕ çĕрулми леçсе панă. «Труд», «Ишлей», Андреев ячĕпе тăракан тата «Эстафета» колхозсем купăста типĕтсе плана 100 процентчĕпех тултарнă.

Кĕтеснерти завод хăйĕн пахча-çимĕç типĕтес планне 109 процент, хăйăр тăварлас плана 155 процент, помидор тăварлас тĕлĕшпе плана 300 процент тултарнă.

Районри предприятисенчи рабочисем хушшинче двухсотниксем сахал мар. Спортинвентарь фабрикинче ударниксем, стахановецсем, двухсотниксем нумай. Вĕсенчен чылайăшĕ нормăна ялан 200—300-шер процент тултарса ĕçлеççĕ.

С. Терентьева 314 процент, А. Кириллова — 205 процент, Е. Иванова — 249 процент, Н. Ворков — 279 процент, А. Кузьмина — 210 процент тултарать. П. Осипенко ячĕпе тăракан артель пухнă япаласенчен ăшă тумтирсем хатĕрлесе плана 110—122 процент тултарчĕ. Уйрăм работницăсем, сăмахран, К. Табажова нормăна 115 процент, Фокина 114 процент тултарса ĕçлеççĕ.

Сталин юлташăн докладне пухусенче районĕпе 8836 çын хутленĕ. Халĕ доклада агитаторсем, коммунистсем, комсомолецсем, учительсем уйрăм бригадăсене, фермăсене кайса колхозниксене ăнлантарса параççĕ. Ун хыççăн колхозниксем хăйсем çине конкретлă обязательствăсем илеççĕ, Хĕрлĕ Çара пулăшма тăрăшаççĕ.

«Хĕрлĕ Çăлтăр» колхозра оборона фондне пĕтĕмĕ 4.000 тенкĕлĕх облигаци пухăннă. Гершин колхозник оборона фондне 700 тенкĕлĕх, И. Тимофеев—450 тенкĕлĕх, Л. Власов — 150 тенкĕлĕх заем облигацийĕсене хывнă.

А. КУЗЬМИНА.

Агитаторсем ĕçре

Вăрман Енĕшри «Свобода» колхозра Сталин юлташ докладне колхозниксем хушшинче ăнлантарса парас тĕлĕшпе агитаторсем аван ĕçлеççĕ. Чернов тата Захарова агитаторсем, колхозниксем ĕçленĕ çĕре тухса, Сталин юлташ доклачĕ пирки икĕ хутчен калаçусем иртернĕ.

Колхозниксем пурте çулпуç докладне пĕр кăмăллăн ырлаççĕ, ăна пурнăçа кĕртес тĕлĕшпе хăйсем çине татăклă обязательствăсем илеççĕ.

— Сталин юлташăн доклачĕ пире тата лайăхрах ĕçлеме хавхалантарать. Ана пурнăçа кĕртессишĕн пирĕн тăрăшса ĕçлемелле, ĕçе вăрçă вăхăтне тивĕçлĕ пек организацилемелле. Ĕнир çулпуç чĕнĕвне пурнăçа кĕртессишĕн, ăмăртура мала тухассишĕн кĕрешетпĕр,—тет пĕрремĕш бригадăн бригадирĕ М. Степанова юлташ.

Пĕрремĕш бригада чăн та пур енĕпе те кăтартуллăн ĕçлет. Вăл аван çапса пĕтерчĕ.

Сталин юлташ докладне ăнлантарса парас тĕлĕшпе Уйкас Кипек ялсоветĕнче те аван ĕçлеççĕ. Кунта 19 агитатора бригадăсем сумне çирĕплетсе тухнă.

В. ЯКОВЛЕВ.

„Çĕнтерӳ хăй тĕллĕн пулмасть“

Росглаввино Шупашкарти комбинатĕнчи рабочисемпе служащисем хăйсен çак кунсенче пулса иртнĕ пухăвĕнче Оборонăн Государственный Комитечĕн Председателĕ Сталин юлташ тунă доклада пысăк хаваслăхпа сӳтсе-явнăç.

— Пирĕн совет халăхĕ юнлă фашизма çĕнтеретех. Çĕнтерӳ пирĕн алăра пуласси çинчен Сталин юлташ çавтери ĕнентерӳллĕн каласа панă. Çулпуç сăмахĕ совет çыннисене çĕнĕ вăй панă. Çĕнтерӳ хăй тĕллĕн пулмасть. Ана пирĕн пĕтĕм вăя хурса çĕнтерсе илмелле. Фронта тата вăйлăн пулăшса пымалла, ăна валли нумайрах продукци, аш-какай, сĕт памалла, — тенĕ Сушин.

Сталин юлташăн историллĕ кăтартăвĕсене ăнăçлăн пурнăçласа пырас тĕлĕшпе коллектив хăйĕн çине конкретлă обязательствăсем илчĕ. Комбинат хăй туса кăларакан продукцине планпа кăтартничен 510.000 тенкĕ ытларах, государство бюджетне планпа пăхничен 60.000 тенкĕ ытларах тупăш пама пулчĕ. Кунсăр пуçне комбинат кăçал планран ирттерсе государствăна пĕр тонна аш-какай, 5 тонна сĕт пама пулчĕ.

М. ВАСИЛЬЕВ.

Калинин фронтĕнчи хаяр çапăçусем

КАЛИНИН ФРОНЧĔ, ноябрĕн 18-мĕш. (ТАСС спецкорĕ). Пирĕн оборонăн сылтăм флангĕнче наступлени тума хăтланса пăхни арканса кайнă хыççăн, — çав наступленире нимĕçсен 102-мĕш пехотнăй дивизийĕ пысăк çухату тӳснĕ,—ноябрĕн 17-мĕшĕнче противник тепĕр участокра наступлени пуçланă.

Наступлени тума противник унта малтан мотопехота, танксем тата авиаци пулнă. Ноябрĕн 15-мĕшĕнче 9 сехетрен пуçласа икĕ сехет хушши артиллерипе персе тăнă хыççăн, нимĕçсем пирĕн оборонăна татса кĕрес шутпа, Хоменко командирăн оборона участокĕнче наступлени пуçласа янă. Анчах Германи пехотин вăйлă атаки пирĕннисем питех те çирĕп хирĕç тăнине çине пырса тăрăннă. Пулеметсенчен питех те тĕл персе тивретсе гитлеровецсене пĕр хĕрхенмесĕр пĕтере-пĕтере тăкнă. Çине тăрсах атакăланă пулсан та тата вăйсем пирĕннинчен нумайрах пулнă пулсан та, нимĕçсем çав енче çитĕнӳ тăвайман. Фашистсене каялла хăваласа янă. Çав участокра виçĕ талăк ытла ĕнтĕ хаяр çапăçусем пыраççĕ.

Атăл урлă каçмалли переправăпан уйрăмах вăйлă çапăçусем пыраççĕ. Германи пехоти, танксем тата бронемашинăсем пулăшнипе, темиçе хутчен те Атăл урлă каçма хăтланса пăхнă, анчах кашнинчех ăна сире-сире пăрахнă. Телков командирăн чăсĕ тăшмана питех те пысăк çухату тӳстернĕ. Тăшман пехотине пĕр батальон çурă таран тата виçĕ танк пĕтерсе тăкнă.

Чанчибадзе командирăн боецĕсем фашистсен атакисене геройла сире-сире тăраççĕ, вĕсем Л. юханшыв районĕнче противника питех те пысăк çухату тӳстереççĕ. Нимĕçсем чăннипех те питĕ пысăк çухату тӳсеççĕ. Ноябрĕн 15-мĕшпе 16-мĕшĕнчи çапăçусенче противникăн салтакĕсене офицерĕсене 800 çынна çити пĕтерсе тăкнă. Тытăкăна лекнисем нимĕç салтакĕсен шухăш-кăмăлĕсем питех те начарри çинчен кăтартса параççĕ.

— Эпир çапăçăва,—теççĕ вĕсем,—персе пăрахассипе хăратăкине пула кĕретпĕр. Юлашки икĕ кун хушшинче çапăçакан вырăна апат-çимĕçсем пачах туртгарса пыман. Эпир выçă, пире сывĕсем асаплантараççĕ. Нимĕçсен 88-мĕш дивизийĕн 167-мĕш пехотнăй полкĕнчи 3-мĕш тата 11-мĕш ротăсенче салтаксем аманас тесе çапăçура хăйсен аллисене пуля тивмелле юрнех çӳлелле çĕклесе выртнисем сахал мар пулнă.

Пысăк çухатусене пăхмасăрах нимĕçсем çапăçусен районне пысăк вăйсем пухаççĕ. Çапăçусем пĕр йăвашланмасăр пыраççĕ.

И. ДЕНЕНБЕРГ.

ПАРТИ ПУРНĂÇĔ

Пленум решенийĕсене пурнăçа кĕртсе пыратпăр

ВКП(б) Чăваш Обкомĕн VIII-мĕш пленумĕн решенийĕсене пурнăçа кĕртсе пырса, партин пуçламăш организацийĕсем нумайĕшĕ партиллĕ-политикăллă ĕçе лайăхлатрĕç. Хальхи вăхăтра парторганизацисем Оборонăн Государственный Комитечĕн Председателĕ Сталин юлташ Мускав Совечĕн чаплă ларăвĕнче тунă доклада тата Хĕрлĕ Çар парадĕнче каланă сăмаха ĕççынисене ăнлантарса парас тĕлĕшпе ĕçлеççĕ.

Çĕрпӳри вăтам шкулти парторганизаци (секретарĕ Буркова юлташ) политикăллă-массăллă ĕçе учительсемпе вĕренекенсем хушшинче кулленех туса пырать. Унта политикăллă темăсемпе докладсем, калаçусем ăланах иртте-реççĕ. Парти организацийĕ комсомол, профсоюз, осоавиахим организацийĕсене ертсе пырас ĕçе чылаях лайăхлатрĕ, вĕсен ĕçне вăйлатма тăрăшать. Пленум пулса иртнĕ хыççăн ку парторганизаци пĕр çынна парти ретне илнĕ.

Районри финанс отделĕ çумĕнчи парторганизаци финанс работникĕсем хушшинче политикăллă ĕçе йĕркелесе ячĕ. Унта кашни кунах заняти пуçланас умĕн политинформаци иртте-реççĕ тата хальхи самантри лару-тăру çинчен калаçусем пулаççĕ, хаçатсем вуласа кăтартаççĕ, калаçусем ирттереççĕ. Ку ялсоветĕнче массăллă ĕçе анлăн сарса янă май Хĕрлĕ Çар валли ăшă тумтирсем пухасси ăнăçлăн пулса пырать, колхозниксем Октябрь уявĕ ячĕпе красноармеецсем патне кучченеçсем ярса панă.

Çав вăхăтрах ВКП(б) Обкомĕн VIII пленумĕн решенийĕсене пурнăçа кĕртес тĕлĕшпе вăрахăн ĕçлекен пуçламăш парторганизацисем те пур-ха. Примус горелкисем тăвакан заводри (секретарĕ Галактионов юлташ) тата МТС-ри (секретарĕ Буинцев юлташ) пуçламăш парторганизацисем Обкомăн VIII пленумĕн итогĕсем çинчен халиччен те коммунистсен пухăвĕсенче сӳтсе-явман. Çак парторганизацисен секретарĕсем партиллĕ-политикăллă ĕç сине сахал çавăрăнса пăхаççĕ. Ку предприятисенчи рабочисем хушшинче докладсемпе калаçусем ирттернине сайра-хутра кăна пулкалать, социализмлă ăмăртăва формально кăна организацияленĕ. Çак парторганизацисем 1941 çулта парти ретне пĕр çын та илмен.

Партин районри организацийĕн партиллĕ-политикăллă ĕçри çитменлĕхсене кĕске вăхăтра пĕтерсе, çав ĕçе Обком пленумĕ кăтартса панă пек йĕркелесе яма тăрăшмалла.

А. АНТОНОВ.

ВКП(б) Çĕрпӳ райкомĕн орг-инструкторски отделĕн заведующийĕ

Пирĕн колхозри фермăсен ĕçĕсем

Пирĕн колхозри фермăсенче ĕçлекенсем обществăллă выльăх-чĕрлĕхсен йышне тата вĕсен продуктивноçне ӳстересшĕн пĕр-пĕринпе ăмăртса ĕçленипе чылай паха ĕçсем турĕç. Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плана: ĕнесем енĕпе 102 процент, сурăхсем енĕпе 110 процент, сыснасем енĕпе 350 процент, кайăк-кĕшĕк енĕпе 200 процент тултартăмăр.

Йышлă выльăх-чĕрлĕхе хĕл каçарма тăрăпса хатĕрлентĕмĕр. Фермăсенче ĕçлекенсен вăйĕпех витесене юсарăмăр, пĕр витен урайне çĕнĕ хăмасем сарса тухрăмăр, шăтăк-шатăксене питĕртĕмĕр. Кĕрхи е çурхи шывсем витесене кĕресрен вĕсен йĕри-тавра канавсем алтса хутăмăр.

Хĕл вăхăтĕнче выльăхсене тăрантарма апат çителĕклĕ пулать, 65 тонна вырăнне 110 тонна силос хывса хăварнă. Кунсăр пуçне пин центнера яхăн утă, 450 центнер çуртри улăмĕ, 1165 центнер сĕткенлĕ апатсем уйăрнă. Аван çапса пĕтернĕ май, выльăхсем валли апат татах уйăратпăр.

Пирĕн фермăсенчи выльăхсен продуктивноçĕ пĕчĕккех мар. Кăçал пирĕн вăтам шутпа кашни ĕнерен 1200 литр сĕт суса илмелле пулнă пулсан, ăпир 9 уйăх хушшинче 1000 литр суса илтĕмĕр. Сысна ферминче ĕçлекенсем планлă заданине тултарассишĕн уйрăмах лайăх ĕçлерĕç. Данилов юлташ хăйне çирĕлетсе панă 6 сысна аминчен 118 çăвăр, Федоров 7 амаран 133 çăвăр, Мийахлов 8 амаран 139 çăвăр илсе пăхса çитĕнтерчĕç. Асăннă юлташсене çĕнĕ закон тăрăх ĕçшĕн хусса тӳлеççĕ.

Фермăри пур сурăхсем те кăçал ихшер хут прамларĕç. Çапла вара ăпир кашни 100 сурăх пуçне 210 путек илсе пăхса çитĕнтерме пултартăмăр.

Тунă çитĕнӳсемпе лăпланса лармастпăр, тата лайăхрах ĕçлеме пулатпăр. Таван çĕршыва Германин фашисчĕсене çĕмĕрсе тăкма кирлĕ чухлĕ продуктсем туса паратпăр.

Г. СИНЯКОВ.

Çĕрпӳ районĕнчи «Молодая сила» колхозри ферма заведующийĕ.

Çĕвĕçсем ĕç тухăçлăхне ӳстереççĕ

Индпошив мастерскойĕнче ĕçлекен рабочисемпе работницăсем хушшинче ĕç нормисене ирттерсе тултаракансен йышне тата вĕсен продуктивноçне ӳстересшĕн пĕр-пĕринпе ăмăртса ĕçленипе чылай паха ĕçсем турĕç. Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плана: ĕнесем енĕпе 102 процент, сурăхсем енĕпе 110 процент, сыснасем енĕпе 350 процент, кайăк-кĕшĕк енĕпе 200 процент тултартăмăр.

Йышлă выльăх-чĕрлĕхе хĕл каçарма тăрăпса хатĕрлентĕмĕр. Фермăсенче ĕçлекенсен вăйĕпех витесене юсарăмăр, пĕр витен урайне çĕнĕ хăмасем сарса тухрăмăр, шăтăк-шатăксене питĕртĕмĕр. Кĕрхи е çурхи шывсем витесене кĕресрен вĕсен йĕри-тавра канавсем алтса хутăмăр.

Хĕл вăхăтĕнче выльăхсене тăрантарма апат çителĕклĕ пулать, 65 тонна вырăнне 110 тонна силос хывса хăварнă. Кунсăр пуçне пин центнера яхăн утă, 450 центнер çуртри улăмĕ, 1165 центнер сĕткенлĕ апатсем уйăрнă. Аван çапса пĕтернĕ май, выльăхсем валли апат татах уйăратпăр.

Индпошив мастерскойĕнче ĕçлекен рабочисемпе работницăсем хушшинче ĕç нормисене ирттерсе тултаракансен йышне тата вĕсен продуктивноçне ӳстересшĕн пĕр-пĕринпе ăмăртса ĕçленипе чылай паха ĕçсем турĕç. Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плана: ĕнесем енĕпе 102 процент, сурăхсем енĕпе 110 процент, сыснасем енĕпе 350 процент, кайăк-кĕшĕк енĕпе 200 процент тултартăмăр.

Йышлă выльăх-чĕрлĕхе хĕл каçарма тăрăпса хатĕрлентĕмĕр. Фермăсенче ĕçлекенсен вăйĕпех витесене юсарăмăр, пĕр витен урайне çĕнĕ хăмасем сарса тухрăмăр, шăтăк-шатăксене питĕртĕмĕр. Кĕрхи е çурхи шывсем витесене кĕресрен вĕсен йĕри-тавра канавсем алтса хутăмăр.

Хĕл вăхăтĕнче выльăхсене тăрантарма апат çителĕклĕ пулать, 65 тонна вырăнне 110 тонна силос хывса хăварнă. Кунсăр пуçне пин центнера яхăн утă, 450 центнер çуртри улăмĕ, 1165 центнер сĕткенлĕ апатсем уйăрнă. Аван çапса пĕтернĕ май, выльăхсем валли апат татах уйăратпăр.

Индпошив коллективĕнче çакнашкал тĕслĕхсем татах та нумай. Çакă вăл Октябрь уявĕ умĕн двухсотниксен йышĕ 11 çын хутшăннинчен те лайăх курăнать.

Мастерскойри работницăсем, производство планне ытлашшипех тултарса пынă вăхăтрах, общественнăллă ĕçе те активлăн хутшăнаççĕ. Вĕсем рабочисене кулленхи çĕнĕ хыпарсене, хаçатсенче пичетленекен статьясене вуласа параççĕ.

Çĕвĕç М. Николаева Хĕрлĕ Çар боецĕсене валли ăшă тумтирсем пухса парас ĕçе активлăн хутшăннă. Вăлах стена хаçачĕн редакторĕ пулса ĕçлет.

Кунта, уйрăмах, граждан вăрçинче медсестра пулса ĕçленĕ М. Шиманская юлташăн пултарулăллă ĕçне палăртса хăвармалла. 1922 çулта Волочаевск патĕнчи çапăçура пулнă Шиманская, мастерскойри работницăсем хушшинче пысăк авторитетпа усă курать. Шиманская пуçарнипе мастерскойра ГСО кружокне организацияленĕ. Унта пĕтĕмпе 20 çын, пурте лайăх паллăсемпе вĕренсе тухнă. Çавăн пекех ПВХО нормисене паракансем те нумай пулнă. Кунсăр пуçне тата медсестрасен курсĕнче 3 çын вĕренет. Çĕнĕ çулччен коллективри рабочисем хушшинче ПВХО тата ГСО значокĕсен нормисене паманни пĕр çын та юлмасть.

Индпошив мастерскойĕ (председателĕ Стайнова юлташ) ĕççыннисене тĕрлĕ тумтирсем çĕлесе панипе пĕрлех, уйрăм заказсем илсе, Хĕрлĕ Çар боецĕсене валли ăшă тумтирсем, фуфайкăсем, брюкисем нумай çĕлесе панă. Ку заказсене вĕсем срокрах пурнăçласа пынă.

Сталин юлташ Октябрьти Социализмлă Аслă Революци XXIV çул тултарни çинчен Мускав Совечĕн чаплă ларăвĕнче тунă доклад рабочисемпе работницăсен ĕçри хастарлăхне татах та ӳстерчĕ.

Çулпуç докладне радиопа итлесе тата хаçатсем çинче вуласа тухнă хыççăн мастерскойри ĕç тухăçлăхĕ чылай ӳсни сисĕнчĕ. Стахановка С. Сапожникова юлташăн тăватă ывăлĕ фронтра çапăçаççĕ. Хăй вăл, ватă пулсан та, производствăра ĕçлеме пăрахмасть. Сталин юлташ докладне вуласа тухнă хыççăн Сапожникова юлташ çапла каларĕ:

— Эпĕ хам ĕмĕрте чылай ачасем ӳстерсе çитĕнтернĕ. Вăл ачасенчен тăватă ывăлĕ фронтра. Фашистсене хирĕç вĕсем вăйлăн çапăçаççĕ. Кĕçĕн ывăл, Петр—моряк, Ленинград хулине сыхлать. Сталин юлташ доклачĕ манăн ĕмĕте çĕклентерчĕ, ĕçлес хаваслăха тата хытăрах ӳстерчĕ. Доклада вуласа тухнă хыççăн эпĕ Хĕрлĕ Çар боецĕсене тата лайăхрах пулăшатăп. Сталин юлташ çĕнтерӳ пирĕнте пулассине мĕнпур халăха шантарса каларĕ, çав кунсене эпир кĕтетпĕр. Çавăнпа та эпир кашни стахановец, двухсотник пурте фронтăн пĕтĕм вăйпа ĕçлеме тăрăшăпăр,—терĕ.

Юлашки кунсенче мастерской коллективĕ кунран-кун çĕнĕ çĕнтерӳсем туса пырать. Çĕвĕçсем П. Ершов, Иванова, Николаева юлташсем ноябрь уйăхĕн пуçламăшченех кулленхи плана ихшер те виçшер норма тултарса пыраççĕ.

Н. ЮМАНГАЙ.

Арçынсем вырăнне хĕрарăмсем

Çак кунсенче Ишлейри машинно-тракторнăй станцинчи трактористкăсемпе комбайнеркăсен пухăвĕ пулса иртрĕ. Пуху арçынсем вырăнне ĕçлеме 55 трактористка, 10 комбайнерка хатĕрлеме обязательство илчĕ. Трактористкăсемпе комбайнеркăсен тата шоферсен профессине вĕренме чĕнсе, районри хĕрарăмсемпе хĕрсем патне уçă сыру сырчĕç.

Çак чĕнĕве ырласа, вунпăр хĕрарăмсем МТС-а пырса вĕренме илме ыйтаççĕ.

Ноябрĕн 12-мĕшĕнче трактористкăсене хатĕрлекен курс ĕçлеме тытăнчĕ.

С. Г.

Комсомол ретне кĕреççĕ

Вăрнарти ялхуçалăх вăтам шкулĕнче комсомолецсен йышĕ ӳссех пырать. Комсомол комитечĕн секретарĕ З. Кудряшева комсомолецсен йышне ӳстерес тĕлĕшпе тăрăпса ĕçлет. Вăл комсомолецсене фронтри эпизодсем çинчен каласа кăтартать, комсомолецсен умĕнчи задачăсем çинчен ăнлантарать. Халь кăна комсомол ретне 8 вĕренекен кĕчĕç. Вĕсем пурте хастар çамрăксем, вĕренӳре малта пыракансем.

П. СОРОКИН.

Хĕрарăмсем производствăра

Таван çĕршыва хӳтĕлеме фронта кайнă арçынсем вырăнне ĕçлеме хĕрарăмсем тăчĕç. Вĕсем кĕске срокрах ĕçе хăнăхса, ĕç нормисене 2—3 хут иртерсе тултарма тытăнчĕç. Шупашкарти спиртзаводра ĕçлекенсенчен 80 процент хĕрарăмсем шутланаççĕ. Мирлĕ вăхăтра хĕрарăмсем нихăçан ĕçлемен ĕçсене халĕ пысăк çитĕнӳсемпе туса пыраççĕ. Е. Филиппова, М. Воротникова, Е. Беляшова юлташсем кулленхи ĕç нормисене 150—200-шер процент пурнăçласçĕ.

Çавăн пекех «Кооператор» артелĕн мастерскойĕнче те 70 процент ытла хĕрарăмсем ĕçлеççĕ. Коваленко, Иванова тата ытти юлташсем те ĕç нормисене 150—200-шер процент таран тултарса пыраççĕ. Кунта нормăна тултарайманни пĕр çын та çук. Хальхи вăхăтра пирĕн производствăсенче хĕрарăмсем чи хастарлă вăйсем пулса тăраççĕ.

ДАНИЛОВ—ЧАЛДУН.

Вулав çурчĕ вăрçă кунĕсенче

КАНАШ. Асхвари «Хĕрлĕ хĕм» колхоз çумĕнчи вулав çурчĕ районра чи лайăх ĕçлекен вулав çурчĕсенчен пĕри. Унăн заведующийĕ Михайлов юлташ, ВКП(б) членĕн кандидачĕ, хăйĕн ĕçĕсене чĕререн юратса тăвать. Михайлов юлташ отечественнăй вăрçăн малтанхи кунĕсенчех вулав çурчĕн ĕçне урăхлатса çĕнетрĕ.

Вăл тăрăшнипе вулав çурчĕ çумĕнче агитпункт организацияленĕ. Агитпункт ĕçне учительсемпе комсомолецсене тата ялсовет депутачĕсене явăçтарнă.

Агитпункт колхозниксем хушшинчи политикăллă-массăллă ĕçе план тăрăх туса пырать. Сăмахран, октябрь уйăхĕнче агитатор Г. Яковлев юлташ, Хĕрлĕ Çарта тăракансен семьи членĕсене пухса, «Совет халăхĕн фашизма хирĕç отечественнăй вăрçи» темăпа доклад туса панă. Çав доклада итленĕ çĕрте 73 çын пулнă. Нумаях пулмасть агитпункт пуçарнипе ятарласа колхозник-ударниксен пухăвне туса иртернĕ. Вăл пухура 178 çын пулнă. Унта Яковлев юлташ «Европăри халăхсем фашизма хирĕç кĕрешни тата колхоз умĕнче тăракан задачăсем» темăпа доклад туса панă.

Колхозниксем ăçта—агитаторсем те çавăнта. Агитаторсем фермăсенче ĕçлекенсем хушшинче час-часах пулаççĕ. Вĕсене хальхи вăхăтри лару-тăрупа умра тăракан задачăсем çинчен ăнлантарса параççĕ. Сăмахран, фермăсенче ĕçлекенсене октябрь уйăхĕн малтанхи кунĕсенче «Фашизм—хресченсен юнлă тăшманĕ» темăпа доклад туса панă. Çав вăхăтрах выльăхсене хĕл каçарма хатĕрленес ĕçри итогсене тимлĕн тишкерсе тухнă, çитменлĕхсене пĕтерес тĕлĕшпе васкасах мĕн-мĕн тумаллисене палăртнă. Çакăн хыççăн выльăхсене хĕл каçарма хатĕрленес ĕçре пысăк улшăнусем курăнчĕç. Фермăсенче ĕçлекенсем хăйсемех выльăх витисене юсаса ăшăтрĕç. Колхозăн пурĕ 6 ферма. Кашни фермăрах выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плана пурнăçа кĕртнĕ. Халĕ ĕнтĕ выльăхсем ăшă та çутă витесенче туттăн хĕл каçасса шанма пулать.

Докладсемпе калаçусене ирттерме агитаторсем малтанах тĕплĕн хатĕрленеççĕ. Çакна пула докладсемпе калаçусем лайăх иртеççĕ, вĕсене колхозниксем питĕ интересленсе, йышлăн пухăнса итлеççĕ. Акă, агитатор Иванов юлташ çак кунсенче пĕтĕм тĕнчери лару-тăру çинчен доклад туса панă. Çав докладне итленĕ çĕрте 73 çын пулнă. Нумаях пулмасть агитпункт пуçарнипе ятарласа колхозник-ударниксен пухăвне туса иртернĕ. Вăл пухура 178 çын пулнă. Унта Яковлев юлташ «Европăри халăхсем фашизма хирĕç кĕрешни тата колхоз умĕнче тăракан задачăсем» темăпа доклад туса панă.

Колхозниксем ăçта—агитаторсем те çавăнта. Агитаторсем фермăсенче ĕçлекенсем хушшинче час-часах пулаççĕ. Вĕсене хальхи вăхăтри лару-тăрупа умра тăракан задачăсем çинчен ăнлантарса параççĕ. Сăмахран, фермăсенче ĕçлекенсене октябрь уйăхĕн малтанхи кунĕсенче «Фашизм—хресченсен юнлă тăшманĕ» темăпа доклад туса панă. Çав вăхăтрах выльăхсене хĕл каçарма хатĕрленес ĕçри итогсене тимлĕн тишкерсе тухнă, çитменлĕхсене пĕтерес тĕлĕшпе васкасах мĕн-мĕн тумаллисене палăртнă. Çакăн хыççăн выльăхсене хĕл каçарма хатĕрленес ĕçре пысăк улшăнусем курăнчĕç. Фермăсенче ĕçлекенсем хăйсемех выльăх витисене юсаса ăшăтрĕç. Колхозăн пурĕ 6 ферма. Кашни фермăрах выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плана пурнăçа кĕртнĕ. Халĕ ĕнтĕ выльăхсем ăшă та çутă витесенче туттăн хĕл каçасса шанма пулать.

Докладсемпе калаçусене ирттерме агитаторсем малтанах тĕплĕн хатĕрленеççĕ. Çакна пула докладсемпе калаçусем лайăх иртеççĕ, вĕсене колхозниксем питĕ интересленсе, йышлăн пухăнса итлеççĕ. Акă, агитатор Иванов юлташ çак кунсенче пĕтĕм тĕнчери лару-тăру çинчен доклад туса панă. Çав докладне итленĕ çĕрте 73 çын пулнă. Нумаях пулмасть агитпункт пуçарнипе ятарласа колхозник-ударниксен пухăвне туса иртернĕ. Вăл пухура 178 çын пулнă. Унта Яковлев юлташ «Европăри халăхсем фашизма хирĕç кĕрешни тата колхоз умĕнче тăракан задачăсем» темăпа доклад туса панă.

Агитаторсем пĕр октябрь уйăхĕнче çеç 30 доклад ытла туса панă. Вăл докладсене пурĕ 1.500 çын ытла итленĕ.

Агитаторсем хушшинчи политикăллă-массăллă ĕçе партипе правительство заданийĕсене вăхăтра пурнăçа кĕртессипе тата колхозăн производство ĕçĕпе таччăн çыхăнтарса пыраççĕ. Вĕсен пуçарăвĕпех колхозниксем Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли ăшă тумтирсем пухас ĕçе те активлăн хутшăнчĕç. Кĕске вăхăтрах 84 тир, 3 мăшăр çăматă, 18,6 килограмм çăм т. ыт. ăпаласем те нумай пырса панă. Агитатор Михайлов юлташ хăй пĕченех 20 тир, 4,9 килограмм çăм, 7 алшăлли т. ыт. ăпаласем те пухнă.

Михайлов юлташ вулав çурчĕн ăшчиккине плакатсемпе лозунгсем тата партипе правительство руководителĕсен портречĕсене çапса илемлетнĕ. Вăлах оборонăллă литературăпа витринине тата «Юлашки хыпарсен хăмине» организацияленĕ. Вĕсене вулав çуртне пыракансем интересленсех вуласаççĕ.

Вулав çуртне колхозниксем кашни каçах йышлăн пухăнаççĕ. Михайлов юлташ вĕсене радио, патефон итлеттерет, хаçат-журналсем вуласа парать.

Кунсăр пуçне вулав çуртĕнче тата консультаци пункчĕ ĕçлет. Ун урлă колхозниксем тĕнчери лару-тăру çинчен, отечественнăй вăрçă фрончĕн хыпарĕсем тĕлĕшпе тата ытти çинчен те тивĕçлĕ ответсем илеççĕ. Консультантсем пулма чи лайăх агитаторсене, учительсене уйăрнă.

Михайлов юлташ юлашки вăхăтра колхозниксем хушшинчи оборона ĕçне вăйлатнă. Вăл пуçарнипе ПВХО, ГСО кружокĕсем организацияленĕ. ГСО кружокне трахсестра М. Яковлева юлташ ертсе пырать. Вăл 8 хĕрачана аманнисене малтанхи пулăшу параканскем пулма хатĕрлет.

Григорьев учитель колхозниксене стройпа утассине, винтовкăн материальнăй чаçĕсене вĕрентет. Вăл иртерекен занятисене яланах 85 çынран кая мар пуçтарăнать.

Кунсăр пуçне вулав çуртĕнче тата драмăпа хор кружокĕсем пур. Кăçал драмкружок унă пьеса выляса панă. Нумаях пулмасть «Тапрану» пьесăна лартрĕç. Спектакле 400 çынна яхăн пырса курчĕ.

Вулав çурчĕн пысăк библиотека пур. Унта 1000 кĕнекене яхăн шутланать. Ку шутра оборонăллă литература кĕнекисенчен: «Чапаев», «Тăвăлпа çуралнисем», «Хурçă епле хĕрнĕ», «Çăкăр», «Вăрçă кунĕсем» т. ыт. те пур. Юлашки кунсенче кăна библиотекăран кĕнеке илсе вулакансен хисепĕ 145 çын таран ӳснĕ.

Ив. МАЛОВ.

Çĕршыв валли паха çимĕççем

Çĕршывăн продовольстви запасне тăвас тĕлĕшпе халăх çĕнĕрен те çĕнĕ ĕçсем пуçарса пырать. Колхозсем халĕ пахча-çимĕççем типĕтес енĕпе вăйлăн ĕçлеççĕ.

Ишлей районĕнчи чылай колхозсем çак çĕнĕ ĕçĕн техникине кĕске вăхăтрах вĕренсе çитрĕç. Пахча-çимĕççем типĕтес тĕлĕшпе колхозсенче курссенчен вĕрентсе кăларнă çынсем ĕçлеççĕ. Курссенчен пурĕ 105 çын вĕренсе тухнă.

Чылай колхозсенче ятарласа сушилкăсем турĕç. «Эстафета» колхозра ятарласа тунă сушилкăра кулленех пысăк хисеппе çĕрулми тата купăста типĕтеççĕ. Рязанова бригадир ĕç тӳхăçлăхне кулленех ӳстерсе пырать. «Прожектор» колхозра пахча-çимĕççене пекарньăра типĕтмелле турĕç. Колхоз çак уйăхра пахча-çимĕççем типĕтсе памалли обязательствăна 254 процент пурнăçларĕ. Катраç ялсоветне кĕрекен «Мотор» колхозри колхозниксем хальхи вăхăтра пурте пахча-çимĕççем типĕтес тĕлĕшпе ĕçлеççĕ. Ф. Сорокина колхозница хăйĕн килĕнчи кăмакара типĕтет. Вăл ку вăхăтчен 26 килограмм типĕтсе панă. Г. Ермолаева, А. Сорокина тата ытти колхозницăсем 12—15-шер килограмм типĕтсе панă. Çак колхозри хуçалăхсем пурĕ 460 килограмм çĕрулми типĕтнĕ, вăл шутран 360 килограмм çĕрулмине хатĕрлев организацине леçсе панă.

Çавăн пекех «Большевик», «Париж Коммуни», «Самолет» колхозсенче те çĕрулми типĕтес ĕçе лайăх организациленĕ.

С. ГОРЛАНОВ.

Отравляющи веществосен тĕп свойствисем тата вĕсемпе авиаци мĕнле усă курни

Химилле хĕçпăшалпа тăшман авиацийĕ войскăсемпе халăха отравляющи веществосемпе (ОВ-семпе) массăллăн сиенленĕ çĕрте, политикăллă тата административлă центрсене, çар объекчĕсене, заводсене т. ыт. те час сӳрĕлмен ОВ-семпе сиенленĕ çĕрте усă курать. Çакна вĕсем сывлăпран тапăннипе пулнă сиенсене тӳрлетме канăçлăх, тылра паника пуçласа ирас шутпа тăваççĕ. Хальхи вăхăтри авиаци аллинче хĕллехи условисенче химилле тапăну тунă чухне усă курма май килекен çакăн пек химилле средствăсем пур:

1. Авнацин тăхса хăваракан приборĕсемпе (ВАП-семпе) чĕрĕ вăй сине час сӳрĕлмен отравляющи веществосем тăкса хăварма, халăх пурăнакан вырăнсене, çар объекчĕсене т. ыт. те сиенлеме усă кураççĕ.

Çак приборсене 100 килограмран пуçласа 800 килограмм таран отравляющи вещество кĕрет.

Кун пек приборсене самолетăн фюзеляжĕ е çуначĕ айне çирĕплетсе лартаççĕ.

Тăкса пыракан отравляющи вещество сывлăш юхăмĕпе сирпĕнсе саланать те, вĕтĕ тумламсем пулса, çĕр сине çăмăр пек çăвать.

2. Час сӳрĕлмен отравляющи вещество тултарнă авиабомбăсем.

Химилле бомбăсен взрыв тăвакан зарячĕ пысăк пулмасть, мĕншĕн тесен взрыв тăвакан вещество кунта бомба хушшине çурса пĕрахса отравляющи веществона сапаласа тусанлама çеç кирлĕ. Çавăнпа та химилле бомба çурăлса кайнине, урăх тĕрлĕ бомба çурăлса кайнипе танлаштарсан, взрыв сасси вăйсăртарах пулни тăрăх часах уйăрса илме пулать.

Час сӳрĕлмен отравляющи вещество тултарнă авиабомбăсем çурăлса кайсан, отравляющи веществона взрыв вăйĕ бомба хуппинчен сирпĕтсе кăларать те чĕрĕ вăя тата таврари вырăна сиенлет. Час сӳрĕлмен отравляющи вещество тултарнă авиабомбăсем пырса перĕнипе çурăлса каяканнисем тата пĕр-пĕр дистанцире тин çурăлса каяканнисем пулаççĕ. Малтанхи йышши бомбăсем çĕр çумне е пĕр-пĕр япала çумне пырса çапăннипе çурăлаççĕ. Тепĕр йышшисем — çĕр сине ӳкиччен пĕр-пĕр дистанци çуллĕшĕнче, сăмахран, 100—150 метр çуллĕшĕнче çурăлса каяççĕ. Ку йышши бомбăсем хăйне уйрăм дистанциллĕ взрыватель пулăшнипе çурăлаççĕ, йĕри-таврари вырăна отравляющи веществона çумăр пек сапалаççĕ.

Пырса перĕннипе çурăлса каякан бомба сиенлеме пултаракан çĕр лаптăкĕ 350 квадратлă метртан пуçласа 800 квадратлă метра çитет. Çил пур чухне, отравляющи веществон тумламĕсене çил вĕçтерсе кайнине пула, сиенленекен лаптăк пысăкрах та пулма пултарать. Авиабомбăсене тултаракан тата ВАП-сенчен тăкса хăваракан ытларах сарăлнă отравляющи вещество вăл — иприт пулать. Иприт вăл—çу евĕрлĕ веществосем тултарнă авиабомбăсем çурăлса кайсан, яланах тенĕ пек, отравляющи веществоран лайăх курăнакан тĕтĕм пĕлĕчĕ пулать: бомба çурăлнă хыççăн отравляющи вещество пăс е тĕтре евĕрлĕ пулать. Бомба çурăлса кайнă вырăн сывăхĕнчех отравляющи веществон сиенлĕ тĕтри питĕ çăра пулать, вăл противогаз тăхăннă çынна та сиен кӳме пултарать. Бомба çурăлса кайнă вырăнта пĕчĕк воронка пулать, ку воронкăран вара нумай вăхăт хушши, тăпра е юр сине сăхса кĕнĕ отравляющи вещество пăсланнине пула, тĕтĕм тухса тăрать. Авиабомба çурăлса кайнă хыççăн пулнă отравляющи вещество пăсĕ, çилпе вырăнтан вырăна куçса пырса, хăйĕн çулĕ çинче тĕл пулакан çынсемпе выльăх-чĕрлĕхсене, вĕсен сыхланмалли средствисем çук пулсан, сиенлесе хăварать. Çил вăтам вăйпа (секундăра 3—4 метр) вĕрнĕ чухне 250 килограмм туртакан авиабомба çурăлса кайсан—500—600 метр тăршшĕнче, 500 килограмм туртакан авиабомба çурăлса кайсан — 800—1000 метр тăршшĕнче сиенлеме пултарать. Отравляющи веществон пăсĕ çилпе тата сывлăш юхăмĕсемпе ерипенех сарăлса шĕвелсе пырать те хăйĕн сиенлекен свойствине çухатать. Сиенлĕ тĕтре хăй сарăлнă вырăнта 20 минутăран пуçласа 40 минутăна çити тытăнса тăма пултарать, çил пулмасан тата ОВ пухăнса тăма пултаракан вырăнсенче (нӳхреçсенче, çырма-çатрасенче, хӳтĕ вырăнсенче, вăрмансенче т. ыт. çĕр те те) ОВ-сем хăйсен сиенлĕхне 2—3-шер сехет хушши те упраса тăма пултараççĕ.

Химилле авиабомбăсене тултаракан час сӳрĕлекен отравляющи веществосен çакăн пек свойствăсем пулаççĕ: фосген—сывлăшран 3,5 хут йывăртарах газ, унран пăнтăхнă утă е çĕрне панулми шăрши кĕрет. Сывлăшпа хутăшсан фосген шурăрах тĕслĕ тĕтĕм пулать. Фосген вăл—чыхăнтаракан отравляющи вещество. Фосгена кăшт çеç сывласа илсен те, вăл ӳсĕртерме пуçлать, çăварта лайăх мар тутă килекен пулать.

Кăшт çеç фосген хутшăннă сывлăша та, нумайччен сывласа тăрсан, вăл организма питĕ йывăр сиен кӳме пултарать. Фосген нумай хутшăннă сывлăшпа сывласан, сиен кӳни часах палăрать—сывлăш питĕрĕнсе ларать, çын чыхăнса каçăхса кайсах ӳсĕрме пуçлать, карланкă тĕпĕнче пĕçерсе тăракан пулать.

Дифосген—фосгенпа пĕр пекрехех шăршлă шĕвек. Дифосген тултарнă авиабомба çурăлса кайсан, дифосген хăйĕн сиенлĕхне фосгенран нумайрах вăхăт хушши сыхласа усрама пултарать. Дифосген организма фосген евĕрлех сиенлет.

Синильнăй кислота—тĕссĕр, часах пăсланса пĕтекен шĕвек, унран йӳçĕ миндаль шăрши кĕрет. Синильнăй кислотапа сиенленнĕ чухне сывлăш питĕрĕнет, пуç çавăрăнать, чĕре хытă тапма пуçлать, вăй-хал пĕтсе килет тата хăстарать. Вăйлă сиенленсен, çын тăнран каять, шăнăр туртса лартать, паралич çапать те çын часах вилсе каять. Синильнăй кислота организма пĕтĕмшлĕн сиенлекен ОВ-сен ушкăнне кĕрет.

4. Осколкăлă-химилле авиабомбăсем. Осколкăлă-химилле авиабомбăсене чĕрĕ вăя бомбăн ванчăкĕсемпе (осколкĕсемпе) те, тата çав вăхăтрах отравляющи веществосемпе те сиенлеме тăваççĕ. Кун пек бомбăсем ăшне пуринчен ытларах сунаслаттаракан е куçуль юхтаракан отравляющи веществосем тултараççĕ. Çакнашкал бомба çурăлса кайсан, йĕри-тавралла 12—15 метра çити отравляющи вещество тĕтĕмĕ мăкăрланса сарăлать, бомба осколкĕсем 50 метр инçĕшне сирпĕнсе кайса ӳкеççĕ, уйрăм (шултрарах) осколоксем 100 метр таран та сирпĕнсе кайма пултараççĕ. Ку бомбăсем ăшĕнче, химилле бомбăсенчипе танлаштарсан, взрыв тăвакан веществосем ытларах пулаççĕ. Çавăнпа та вĕсем çурăлнă чухне те хытăрах янăраççĕ. Осколкăлă-химилле авиабомбăсем ăшне сунаслаттаракан е куçуль юхтаракан отравляющи веществосем (адамсит, хлороцетофенон т. ыт. те) тултараççĕ. Бомба çурăлса кайсан, çак отравляющи веществосем тĕпренеççĕ те сиенлекен тĕтĕм пулаççĕ. Сунаслаттаракан е куçуль юхтаракан отравляющи веществосен тĕп свойствисем çаксем пулаççĕ:

Адамсит—хытă вещество. Бомба çурăлса кайсан, унран тĕтĕм-сарă тĕслĕ тĕтĕм пулать. Адамсита сывласа ăша илсен, чи малтанхи тапхăртах сăмса шăтăкĕпе карланка хытă пĕçертсе кăтăклантарса илет, çын вара таттисыпписĕр сунаслама тытăнать те, унăн пуçĕ ыратма пуçлать. Сиенленекен тĕтĕмлĕ атмосферăра çын 5—10 минута хушши сывласа тăнă хыççăн, вăл сиенленнине кăтартакан паллăсем 1—2 сехĕт хушши палăрса тăраççĕ те унтан ерипенех иртсе каяççĕ. Çын адамситпа сиенленнĕ сывлăшра нумайччен сывласа тăрсан, мĕнпур организм сиенленсе çын сусăрланма та пултарать.

Юлашки 4-мĕш стракицăра

ПУРНЕ ТЕ ÇАР ЁÇНЕ ВЁРЕНТЕССИ

Çамрăксем тăшман танкёсене пётерме вёренеççё

ЧКАЛОВСКОЕ. Тăшман танкёсене пётерме вёренес тёлёшпе ВЛКСМ райкомё темиçе отряд организацилене. Отрядсенчи çамрăксем—сывлăх енёпе çирёп, хăюллă та шиксёр çамрăксем.

Алманчăри отряда колхозри çамрăксенчен тата вăтам шкулти аслăрах классенче вёренекенсенчен пётёçтерне. Вёсенчен нумайёшё — Ленинла — Сталинла комсомол членёсем. Отряд командирё пулса Изосим Никитин юлташ, отечественнăй вăрçă фронтёнчен канма киле килнёскер, ёçлет. Никитин юлташ Хёрлё Çарта танковăй часра пулнă, çавăнпа вăл танксене хирёç мёнле кёрешмеллине аван пёлет.

Чкаловскинче отряд командирё пулса вăтам шкулта çар ёçне вёрентекен Ростовцев юлташ ёçлет.

Пур отрядсем те ноябрён 12-мёшёнче 110 сехетлё программăна вёренме тытăнчёç. Малтанхи занятисем «танксем тата вёсен пайёсем» темăпа пулса иртрёç.

Боецсем занятисенче хăйсем çирёп дисциплинăллă пулнине тата материала лайăх ăнланнине кăтартаççё. Вёренёве практикăллă ёçпе сыхăнтарма тăрăшаççё. Патăръелёнчи, Туçари, Ыхраçырминчи боецсем танк макечёсем тунă.

Т. ИВАНОВ.

ВАРМАР. Тăшман танкёсене çёмёрсе тăкма вёренес ёçе районра ноябрён 9-мёшёнче тытăннă. Ку ёçе комсомолецсемпе союзра тăван çамрăксем вёренеççё. Ятарласа отрядсем организацилене. Çирёп, хăюллă, пултаруллă çамрăксене командирсем пулса ёçлеме уйăрнă. Отрядсенче политрук сем те пур. Вёсем кашни кунах политинформацисем иртереççё. Тепёр чухне ВЛКСМ райкомёнче ёçлекенсем те политзанятисенче пулаççё. Нумай пулмасть ВЛКСМ райкомён секретарё Аверьянова юлташ вёренекенсене Сталин юлташ Мускав Советён чаплă ларăвёнче тунă докладпа тата вăл Хёрлё Çар парадёнче калану сăмахпа паллаштарнă.

Занятисем вăрçă вăхăтёнчи евёрлё условисенче, иртен пуçласа сём тёттём пуличченех пулса иртеççё. Кашни боецăн хăй тунă винтовка пур. Тăшман танкне тёл пеме вёренме ятарласа танк макечё туса хатёрленё. Çамрăк патриотсен тăшман танкёсене хирёç кёрешме вёренес кăмăлё пысăк. Занятисенче йёркеллё пулса, материала лайăх ăнланса юлма тăрăшаççё. Çапла майпа 110 сехетлё программăна 10—12 кун хушшинче вёренсе пётерме шутлаççё.

—

Е. В.

Çар ёçне вёреннё çёрте

ПАРАЧКАВ. Районри комсомолецсемпе çамрăксем çар ёçне вёренме хёрýллён тытăнчёç. Район центрёнче тăшман танкёсене çёмёрсе тăкма вёренес ёçе ятарласа организациленё. Комсомолецсем тăшман танкне çапса çёмёрме, гранатăсем, сунакан шёвек тултарнă бутылкăсем ывăтма вёренеççё.

Вёренýре кирлё наглядăй пособисем сителёклё. Комсомолец-боецсен вăйёпе танк макетне туса хатёрленё. Унсăр пуçне граната макечёсем, сунакан шёвек тултарнă бутылкăсем те пур.

Исаев юлташ занятисене лайăх хатёрленсе иртерет. Хёрлё Çаран пулас боецёсене практикăллă ёçпе паллаштарать. Роганов, Прокопьев, Рассказов боецсем отлично вёренсе пыраççё.

Сталин юлташăн докладне сýтсе-явнă хыççăн боецсем 110 сехетлё программăна кёске срокра вёренсе пётерме пулчёç. Халё отрядсем хушшинче социализмлă ăмăртăва анлăн сарса янă. Кашни кун политинформацисем туса иртереççё. Стена хаçачё вăхăтра тухса тăрать.

Кашни боец хăвăртрах тăшман танкне çёмёрме вёренсе ситсе, фронта кайма тăрăшать.

Т. КАРАСЕВА.

Самозащита группин паха ёçё

КАЛИНИНО. Отечественнăй вăрçăн малтанхи кунёсенчех Сăкăт ялсоветне кёрекен колхозсене сывлăшран килсе тапăннинчен сыхланас енёпе массăллăланлантарулла ёçе анлăн йёркелесе янă. Самозащита групписен начальникёсене тата звено командирёсене уйăрнă, вёсем хăйсен ёçне вăрçă вăхăтне тивёçлё пек туса пыраççё. Сăкăт ялсоветёнчи ПВХО инструкторё Данилов Виталий тата учительсем Кирилл Афанасьев, Петр Журавлев, Андриан Пальков (Чăваш АССР тава тивёçлё учителё), Е. Иванова тата К. Григорьев тăрăшнипе колхозниксемпе колхозницăсем ПВХО значокён нормисене 248 çын пачёç. Çакăнпа пёрлех «Халăх пурăнакан вырăна светомаскировка тăвасси» темăпа калаçусем туса иртернё хыççăн Сăкăт ялсоветне кёрекен колхозсенчи колхозниксемпе колхозницăсем чýречесене, алăксене тата çутă курăнма пултаракан ытти вырăнсене хупласа, светомаскировка тума вёренчёç. Ку ёçре вёренекенсем те пысăк пулăшу парса пыраççё. Вёсем светомаскировка туни пысăк пулăшу пани çинчен, светомаскировкăна епле тумалли çинчен колхозниксемпе колхозницăсене ăнлантарса параççё.

Г. МАТВЕЕВ.

Финагент лайăх ёçлет

ИШЛЕЙ. Анат-Кёнер ялсоветёнчи финагент З. Толстов хăйён ёçне пултаруллăн туса пырать. Ку ялсоветёнче 167 колхозник страховка укçине, 90 колхозник ялхуçалăх налогне тýлесе татнă. «Активист» колхоз членё Матвеев юлташ укçа-тенкё обязательствине августа уйăхёнчех шурнăçланă.

З. Толстов юлташ укçа-тенкё парса татман колхозниксем патне килёрен сýрет, вёсемпе калаçса налог законёсем çинчен ăнлантарса парать. Çапла туни ăна укçа-тенкё пухас ёçре пысăк пулăшу парать. Ялсовет тăваттăмёш кварталта укçа-тенкё пухмалли плана ноябрён 10-мёш тёлне 67 процент пурнăçласа, районра виççёмёш вырăна тухрё.

Оборонăн Государственный Комитечён Председателё Сталин юлташ Октябрьти революци 24 çул тултарни çинчен тунă доклада итленё хыççăн унăн ёçлес хастарлăхё татах та ýсрё, ăна малалла та çитёнýсем туса пыма хавхалантарчё.

Вăл халё декабрён 1-мёш тёлне пур парăмсене те пухса пётерессишён тăрăшса ёçлет.

Е. СМЕЛОВ.

Америкăн суту-илý парохочёсене хёçпăшаллантарма ирёк паракан закон проектне Рузвельт алă пуснă

ЛОНДОН, ноябрён 18-мёш. (ТАСС). Рейтер агентствин Вашингтонри корреспонденчё пёлтернё тăрăх, Америкăн суту-илý парохочёсене хёçпăшаллантарма ирёк паракан закон проектне Рузвельт алă пуснă.

Рузвельт Япони представителёсене йышăннă

ВАШИНГТОН, ноябрён 18-мёш. (ТАСС). Рузвельт Курусуна тата Японин Америкăри Пёрлешýллё Штатсенчи посолне Намурана йышăнса калаçнă.

США-ра Японин суту-илý палатинче ухтару тунă

НЬЮ-ЙОРК, ноябрён 18-мёш. (ТАСС). Юнайтед пресс агентстви Лос-Анжелосран пёлтернё тăрăх, вăрттăн полици японецсен суту-илý палатин, çавăн пекех японецсен тёп ассоциацийён архивёсене тытса илнё, çав шутах Япони çарёпе тинёс-çар флочён представителёсем патне янă укса-тенкё алла илни çинчен пёлтерекен распискӑсем те кёреççё. Японин официальнăй представителёсем çапла калаççё: Рузвельт чрезвычайнăй положени çинчен пёлтерсен, Японин çар представителёсене укса-тенкё яма тăрахнă, теççё.

Америкăри Пёрлешýллё Штатсем хăватлă техникăллă çар хатёрлеççё

ЛОНДОН, ноябрён 18-мёш. (ТАСС). «Дейли экспресс» хаçатăн Нью-Йоркри корреспонденчё çапла пёлтерет: Америкăри Пёрлешýллё Штатсем çавтери хăватлăн хёçпăшалланмалли план туса йышăннă. Ку план Германин генеральнăй штабё шутлама пултарнисенчен пуринчен те мала иртсе каять. Планăн хăшпёр цифрёсем çакăн пек шутланаççё.

Америкăри хёçпăшаллă вăйсен йышё тăватă миллион çынран иртмелле. Авиацире 25.000 бомбардировщик пулмалла. Çав бомбардировщиксем—шăнăçнă таран бомбăсем тиесе Атлантика океанё урлă каçса каялла тавăрăнма юрăхлă пулаççё. Кусемсёр пуçне тата ытти йышши самолетсем 50.000 таран пулмалла. Хальхи вăхăтра Америкăра хёçпăшал туса кăларакан предприятисем 12.000 шутланаççё пулсан, вёсем 163.000 предприятие çитмелле.

Индия—Англи çарёсен арсеналё

СТАМБУЛ, ноябрён 18-мёш. (ТАСС). Турцири ăрнере пёрре тухса тăракан «Коммерс деливе» хаçат — Индия малашне Англин Çывăхри Хёвелтухăçёпе Африкăри çарёсем валли хёçпăшал туса кăларакан арсенал пулса тăрасси çинчен çырса пёлтерет. Индири металлурги промышленноçё юлашки уйăхсенче 280 тёрлё çёнё йышши продукцисем туса кăларнă. Ку шутра шултра калибрлă орудисем, зенитнăй тупăсем тата ытти йышши хёçпăшалсем те пур.

Çывăх Хёвелтухăçёнче 8-мёш çёнё çар тунă

Каирта çёнё çар организацилене. Унăн ячё çапла: «Хёвеланăç пушхирёнчи саккăрмёш çар». Çак факт вăл Англин тата унăн союзникёсен Çывăх Хёвелтухăçёнчи вăйёсем ýснине кăтартса парать. Саккăрмёш çар çак юлашки уйăхсем хушшинче Çывăх Хёвелтухăçне нумай илсе пынă кучухнехи çёнё хёçпăшалпа туллин хёçпăшаллапа (ТАСС).

Японин ютçёршыв ёçёсен министрё парламент сессийёнче калану сăмах

ТОКИО, ноябрён 18-мёш. (ТАСС). Ютçёршыв ёçёсен министрё Того Япони парламенчён чрезвычайнăй сессийёнче сăмах тухса калану. Вăл «Хёвелтухăç Азире çёнё йёрке тăвас» шутпа Японин Китай тёлёшпе тытса пыракан политики улшăнмасăрах юлнине çирёплетнё. Малалла вăл çапла калану: «Китайри инцидента вёçлесе çитересшён тăрăшнипе пёр вăхăтрах, Япония çурçёр районё ширки тата кăнтăрти тинёссен районё ширки интереслене. Европăра вăрçă тунă хыççăн, Япония пётём Хёвелтухăç Азире мирлёх пултăр тесе, конфликт Хёвелтухăçне сараласран сыхланма мёнпур вăя хунă. Японипе Совет Союзё хушшинче нейтралитет çинчен тунă пакт та асăннă политика тăрăх Çурçёрте хăрушсăрлăх туса хурассине сыхăнса тăрать. Юлашкинчен Германипе ССР Союзё хушшинче вăрçă пуçланса та Япония Çурçёрте хăрушсăрлăха хýтёлеса тăрсе, çав политикăна çирёппён пăхăнса тăнă. Япония çурçёрте мирлёхе пăсма пултаракан факторсем тухса тăрассине кăна мар, тата Японин прависемпе интересёсене хăратса тăракан обстановка пулса тăрассине те пур майсемпе те сирсе яма тăрăшать».

Япония Кăнтăр Индо-Китая оккупацилемине хирёç ответлесе Англипе США Япони фончёсем тёлёшпе секвестр тýни çинчен, кун хыççăн Англи доминионёсемпе колонийёсем тата Голландин Индийё те вёсен примерё тăрăх çавăн пек секвестр туни çинчен пурнăçа кёртме ăна виççёмёш державă чăрмантарма хăтланнине сирсе ямалла; 2) Ютçёршыв держависем Японие хирёç экономикăллă блокада тума пăхакан акта пётермелле; 3) Европăри вăрçă Инçетри Хёвелтухăçне саралассине сирсе ямалла.

Çурçёр Манчжурири лару-тăру çинчен сăмах хускатса, Тодзио çапла калану: «Германипе ССР Союзё хушшинчи вăрçа пула тухса тăнă тёнчери лару-тăру çине Япония пёр шухăшсăр пăхса тăма пултараймасть». Тодзио японецсене çёршывăн нациллё оборонине вăйлатса пыма мёнпур вăя хума чёнет.

Тодзио Япони парламенчён çýлти палатинче тухса калану сăмах

ТОКИО, ноябрён 18-мёш. (ТАСС) Парламентăн çýлти палатинче сăмах тухса каласа, премьер-министр Тодзио çапла пёлтернё: «Юлашки лару-тăрусене пула Японипе Америка хушшинче пыракан калаçусен ăнăçлăхё пирки малтанах каласа пама йывăр, çав калаçусенче правительство хăйён нациллё çирёп политикине пурнăçа кёртсе пыма мён кирлине пурне те тума хатёр», теннё. Тодзио сăмахё тăрăх, Япония Вашингтонпа дипломатиллё калаçусем иртternё çёрте çакăн пек тёллевсем тытать: 1) Япония Китайра туса иртерме палăртнă программăна аса илтерсе, Того çапла калану:

«Çапла вара Япони умне тухса тăнă тёнчери лару-тăру кунран-кун çивёчленсех пычё. Англипе Америка енчен Японие хёсни пирён импери тытăнса тăрассипе çыхăнса тăракан чăнчăн кирлё ыйту пулса тăрать», теннё.

«Китай инциденчён пулăраппа Японипе Америка хушшинчи отношенисем пушшех те начарланчёç, вăхăтра мерăсем йышăнман пулсан, çакă вăл юлашкинчен катастрофа патне илсе пынă пулёччё-и тен», тесе кăтартса панă Того.

Того çапла калану: «Апрель уйăхёнче пуçланнă, анчах результатсем паман каласăва Японин çёнё правительстви США правительствипе малалла туса пыма йышăннă. США правительстви «Японин нациллё нушисене, унăн Хёвелтухăç Азири положенине ăнланса илсен тата хальхи обстановкăна хакласан», калаçусене туслăн вёçлеме пулать, тесе калану Того. Малалла вăл çапла пёлтернё: анчах «Япони империйё тытăнса тăрассине хăратса тăракан вăхăт сиксе тухас пулсан, е аслă держава пулса тăракан Японин тивёçлёхне кам та кам пăсма шутлать пулсан, вара Японин çирёп тата татăклă позици йышăнмалла пулать» тата вăл «калаçусене тулли çирёплёхпе иртерме хăй çине обязательство илет», теннё.

Юлашкинчен Того «Япония халё ку таранччен пулман йывăрлăхсем умёнче тăрать», теннё.

Рейтер агентстви Япони политики çинчен

ЛОНДОН, ноябрён 18-мёш. (ТАСС). Рейтер агентстви пёлтернё тăрăх, Япони парламенчён халь пыракан чрезвычайнăй сессийё Лăпкă океанра вăрçă е мир пулас ыйтăва принцип енчен çăмăлах татса пама пултарать. Вашингтонран темиçе хутчен тунă заявленисем çакна кăтартса параççё: США Лăпкă океан çинче пулас вăрçа кёрсе каймалла хатёр тăрать, вăл текех Япони ыйтнине парса ним чухлё те каялла чакас çук. Тата нумаях пулмасть Черчилль хăй сăмахёнче пит уççăн асăрхаттарнине те шутра тытас пулать. Вăл çапла каланăччё: Японипе вăрçа пулсан, Англи США-на тулли пулăшу пама хатёр, теннёччё. Япони правительстви хăйён çарне çёнё контингентсем илесси çинчен тата ахаль те питё ýссе кайнă çар бюджетне татах та ытларах ýстересси çинчен йышăннă решение малта асăннă заявленисене хирёç панă ответ вырăнне шутламалла. Малалла та хăйён хальхи политикинех тытса пырсан, Япония часах йывăр лару-тăрăва кёрсе ýкё.

Шанхайра шикленни тата ёçри активлăх чакни

ШАНХАЙ, ноябрён 18-мёш. (ТАСС). Японипе Америка хушшинчи отношенисем çивёчленсе кайнă май, Шанхайри ёçлё çынсем хушшинче шикленни тата аптăраса тăни уçăнах палăрма пуçланă, ёçри активлăх та чылай чакнă. Хура биржăра юлашки виçё кун хушшинче Китай долларён курсё йýнелсе кайнă. Пёр Америка долларёшён 40—29 Китай долларё тýлеме пуçларёç. Çакă пит характерлă: Англи владёсем Шанхайран англичансене пётёмёшпех кăларса кайма çине тăрса тăрăшаççё. Англи фирмисемпе банкёсем нумайёшё çак ситес кунсенчех Гонконга е Австралие куçса каяççё.

Румыни халăхё Антонескуна шанмасть

ЖЕНЕВА, ноябрён 18-мёш. (ТАСС). Румыни правителё Антонеску генерал хăйён политикине пула Румыни çёршывне нимёçсен чури туса хучё тата Хёвелтухăç фронтёнче Румыни салтакёсене питё нумай пётерттерчё. Çак ёçсем пирки халăх тарăхнине туйса, хăйён хуçисем — нимёç фашисчёсем панă канаш тăрăх, Румынире плебисцит комедине выляса иртерме шутланă. Çак ёçе хатёрлеме Антонеску пётём Румыни тăрăх хăйсен ёçне ăста пёлекен гитлерла мастерсене янă. Çав мастерсем Австрири тата Саар облаçёнчи плебисцита организацилеменё чухне те хăйсен кёсйисене пайтах мул тултарнă ěнтё. Анчах та, çакăн пек мастерсем пулăшнă пулин те, Румынири плебисцита хатёрлеме нумай вăхăт кирлё пулнă. Çав плебисцита Антонеску икё уйăх каярахах туса иртерме сăмах панă пулнă. Унтанпа вăл плебисцит тумалли срока темиçе хутчен те малалла куçарса пынă, мёнпён тесен Антонеску хăйён çёршывёнчи халăх куç кёретёнех Германие хирёç пăлханасран хăраса тăнă. Румынин тёп центрёсене полицине регулярнăй çар вăйёсене чылай пуçтарса тăратнă хыççăн тин вăл çак «халăха сасăлаттармалли» кампание пуçласа янă. Плебесцита хутшăнма ирăк илнё румынсен кашнинех çак тёлёшпе ёçлекен комисси патне пымалла пулнă. Çав комиссире полици тата сигуранца (охранка) çыннисем çеç ларнă. Унта кёнё çынăн вара хăй Антонеску правительствин политикине ырăлани çинчен е ырăламанни çинчен пётём халăх умёнче тата полици умёнче каласа памалла пулнă.

Çакăн пек плебисцита тунă чухне Антонеску правительстви майлă калаттарасшăн пур енчен те хёснё пулин те, малтанхи кун сасăлани плебисцит пётёмпех арканса кайнине кăтартса панă, мёншён тесен халăхăн чи йышлă пайё плебисцита хутшăнман. Çасна пула сасă памалли срока тата темиçе куна тăсмалла пулнă, анчах капла туни те ёçе пулăшман. Лайăх пёлтерекен хыпарçем плебисцита пётём Румынири халăхран мёнпурё те 7 процент çеç хутшăнни çинчен калаççё, ытти 93 процентё сасăлас ёçе хутшăнман. Çак майпа румын халăхё хăй Румынин хальхи правительствине, Румынине Германи фашисчёсене сутса янă правительствăна, шанманнине кăтартса панă. Çапах та, плебисцит ёçёсем çинчен халăха тёрёссипе пёлтерме шикленсе, Антонескупа унăн нимёç консультанчёсем виçё кун хушши канашласа ларнă хыççăн плебисцит çинчен уççăнах курăнса тăракан суя итогсем пичетлесе пёлтернё. Кулăш вăйăн выляканн Антонескун черетлё инсценировкине румын халăхё йышăнмасть. Румынин чăн-чăн шухăш-кăмăлне çакăн пек суйса кăтартса панăшăн Румыни халăхё хаяр тарăхуна тулса çёкленет.

Сербсене 340.000 çынна вёлернё

НЬЮ-ЙОРК, ноябрён 18-мёш. (ТАСС). Ассошиэйтед пресс агентствин корреспонденчё Стамбулран пёлтернё тăрăх, Германия оккупациленёренне фашистсем сербсене 340.000 çынна вёлернё. Гитлер майлă ёçлекен Павелич правительстви епископсемпе священниксене массăллăн хёсрёлесе пусмăрлать тата вёсене вёлерет. Çакна палăртнă: Германия оккупациленёренне Хорват священникёсем 800 çын çухалнă.

Нимёç самолечёсем Мускав çине вёçсе килни

Ноябрён 18-мёш ыран тенё чух çёрле тата ноябрён 18-мёшёнче кăнтăрла нимёç самолечёсен темиçе группи Мускав çине вёçсе килме хăтланнă. Сывлăшра пулнă çапăсусенче тата зенитнăй батарейăсенчен персе, Мускав сывлăхёнче нимёçсен 13 самолетне персе антарнă. Пирён 2 самолет пётнё.

Хула районне вёçсе кёнё пёччеш тер самолетсем çар объекчёсем пулман вырансене фугаснăй бомбăсем пăрахнă. Жертвăсем нумай мар.

Фон Докăн Гитлера панă доклачё

БЕРН, ноябрён 19-мёш. (ТАСС). Германи çарё валли продовольстви тăратас ёçпе сыхăннă çын, çак кунсенче Германирен тавăрăнăскер, çапла пёлтернё: Берлинри çар çыннисен управленийё çине уйрăмах çавăрăнса пăхнă,—теннё. Германи çарён генералитечё, фронт валли хёллехи обмундировани парас ёç япăх тăнăшăн интендантствăн пысăк чиновникёсем айăплă, тесе шутлать. Пысăк çар соединенийёсен командирёсем хăйсен интенданчёсене улăштарнă та ěнтё, тесе калаçаççё.

Çýлте асăннă çыннăн сведенийёсем тăрăхах çакă палла: çар чаçёсен командирёсем пёр-пёр сăлтава пула фронтран Берлина тавăрăнсан тýрех интендантски управленине пыраççё, унта çав командирсемпе чиновниксем хушшинче хёрýллё харкашусем пулса иртеççё. Германин пёр офицерё çапла калану: «Хёлпе интендантсем пире хирёç пёр каварлашу тунă пекех туйăнать», теннё.

Генерал фон Док Гитлера çырса панă доклад ширки калакан сведенисем çар çыннисене пысăк шухăша янă. Фон Док çав докладра Германи çарён интендантски управленийёнчи хăшпёр ответлă чиновниксене ёçрен кăларма Гитлера канаш панă, тесе калаçаççё. Хăй шухăшёпе ёçрен кăларма кирлё тесе шутлакан çынсене список туса кăтартса парса, фон Док çапла калану: «Çав чиновниксем ёç çине кутăнла пăхни тата вёсем кирлё обмундирование оккупациленё районсенчи халăхран туртса илесси çине шанса тăни Германи çарён Хёвелтухăçёнчи ахаль те пысăк йывăрлăхёсене татах та ытларах пысăклатать», теннё.

Греципе Германи салтакёсем çине тапăнаççё

СТОКГОЛЬМ, ноябрён 18-мёш. (ТАСС). «Свенска дагбладет» хаçатăн Берлинри корреспонденчё пёлтернё тăрăх, Грецири чылай ялсене Германи салтакёсем çине хёсрёлсемпе тапăннă. Афины университетёнчи студентсем политикăллă пысăк забастовка пуçласа янă. Наказани парас шутпа нимёç власёсем студентсен пысăк çуртне тата столовăйне хупса лартнă, студентсене 3.500 çынна яхăн апатланмалли вырăнсăр тăратса хăварнă.

Германи хаçачё йышăнни

Гитлер çарё Хёвелтухăç фронтёнче пысăк çухатусем тýсни Германире кашни килтех, кашни çемьерех сисёнтерет, çавăнпа та фашистсен пичечё çав çухатусем çинчен каламасăр тăма текех пултараймасть. Çак кунсенче «Берлинер берзенцейтунг» хаçат пысăк статья пичетлесе кăларнă. Çав статьяра уççăнах çапла çырнă: «Германире пирён хушăмăрта хăйён çывăх çыннине çухатман çын сукпа пёрех», тенё. Хёвелтухăç фронтёнчи çапăсусен йывăрлăхёсем нумай жертвăсем ыйтнине ăнланса илеймен нимёçсене хаçат тарăхса вăрçать. (ТАСС).

Германин „Эбенвальд“ пароходне тытса чарнă

ЛОНДОН, ноябрён 18-мёш. (ТАСС). Рейтер агентстви Нью-Йоркран çапла пёлтерет: Германин «Эбенвальд» пароходне Японирен Германие кайнă чухне тытса чарнă. Çав пароходпа каучук, тёрлёрен металсем тата ытти стратегиçенчен питех те кирлё материалсем илсе пынă пулнă. «Эбенвальд» пароходăн водоизмещенийё 5098 тонна.

Тавлашу пырать

Ютçёршывсен Стамбулри çыннисем хушшинче калану тăрăх, Римри Германи çарён представителёсемпе Итали командованийё хушшинче Хёвелтухăç фронтне Италин çёнё дивизийёсене ярас тёлёшпе калаçусем пыраççё. Нимёçсем итальянецсене Хёвелтухăç фронтне тата 10 дивизирен кая мар яма хушаççё. Итальянецсем çакăнпа килёшмеççё. Вёсем çапла калаççё: çав вăйсем Италие хăйне кирлё—Сирие хýтёлеме, çавăн пекех тата Кăнтăр Италин хулисенчи гарнизонсене вăйлатма кирлё, теççё. (ТАСС).

ХРОНИКА

ССР Союзён Халăх Комиссарёсен Совечё Федор Федорович Кузнецов юлташа иккёмёш рангри армейски комиссар званине памалла тунă.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

РЕДАКЦИ АДРЕСЁ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редактор заместителён — 3—97, редакци секретарён — 4—40, пропаганда пайён — 4—97, парти пурнăç пайён — 7—97, ялхуçалăхёпе промышленность пайёсен — 0—88, çырусемпе рабселькорсен пайён — 2—30, дежурнăйăн — 6—23, «Ленин сулёпе» журналăн — 0—85, издательство конторин—0—23.

НТ 7142.

Гор. Чебоксары, типография № 1 Управления издательств и полиграфии при СНК ЧАССР, Заказ № 557. Ф. б. 58 84 п. л.

Отравляющи веществосен тёп свойствисем тата вёсемпе авиаци мёнле усă курни

(Юлашки, пуçламёшё 3-мёш страницăра)

Хлороцетофенон—хытă вещество, унран фиалка чечекёнчен кёнё пек шăршă кёрет. Хлороцетофенон тултарнă авиабомба çурăлса кайсан, çак ОВ-ран вара кăвакрах-шурăрах тёслё тётём пулать.

Хлороцетофенон куç хупанкисене çунтарса касса ыраттарать, çавтери вăйлă куççуль юхтарать, ýт-тирён тарлакан вырăнсене (хул айне т. ыт. çёрте те) тире кăштах пёсертсе ыраттарать. Çакăн пек явлени темиçе сехете тăсăлнă хыççăн, ыратни тата куççуль юхни ерипенех лăпланать.

Авиацире химилле тапăнуран халăха сыхланмашкăн пёччеш ерён тата коллективпа сыхланмалли средствăсем пур.

Халăх пёччеш ерён сыхланмалли тёп средство вăл—противогаз, коллективпа сыхланмаллисем газоубежищёсем тата газоубежище валли майлаштарнă подвалсемпе хушăксем пулаççё.

Халăхăн, противогазпа усă курма ёренниçёр тата убежищёсенче харпăрхăйне мёнле тыткаламалли правилăсене хăнăхнисёр пуçне, отравляющи веществосен свойствисене тата тăпман авиацине химилле тапăну тунă вăхăтра харпăрхăйне мёнле тыткаламалли йёркесене вёренсе çитмелле.

Тăшман авиацине химилле тапăну тунă вăхăтра хăшпёр уйăрăм çынсем урамра пулнă пирки убежищёсене кёрсе пытанма ёлкёреймеппинисем те пулма пултарассине яланах асра тытмалла.

Тăшман час сýрёлекен отравляющи вещество тултарнă химилле авиабомбăсемпе усă курнă чухне, бомба çурăлса кайнă вырăн çывăхёнчи çынсен сийёнчех, çывăхра убежище пур пулсан, çав убежищёсене кёрсе пытанмалла. Убежищёсем çук пулсан вара май килнё таран хăвăртрах противогаз тăхăнмалла. Противогаз та çук пулсан, сывлама чарăнмалла та васкасах отравляющи вещество сарăлнă вăрăнтан çиле хирёçле май утса тухмалла.

Тăшман çунаслаттаракан е куççуль юхтаракан ОВ тултарнă осколокăл-химилле авиабомбăсемпе усă курать пулсан та, çакăнта сýлерех кăтартса панă пекех сыхланмалла. Тăшман час сýрёлмен отравляющи веществосемпе усă курать пулсан, çак вăхăтра урамра пулнă çынсен сийёнчех çывăхри çурта, лупас айне т. ыт. çёрте те кёрсе пытанмалла та противогаз тăхăнмалла. Час сýрёлмен отравляющи веществон тумламёсем тумтир çине лексен, ăна сийёнчех асăрханса хывмалла та, çуртăн МПВО начальникё кăтартса панă тăрăх, дегазаци тума ăсатмалла. Час сýрёлекен отравляющи вещество тумламё ýт-тир çине лексен, çак вырăна вара индивидуальнăй противохимически пакетпа усă курса çуса тасатмалла, кун пек пакет çумра çук пулсан, сийёнчех медицина тёлёшёнчен пулăшу паракан çывăхри пункта (аптекăна, амбулаторине т. ыт. çёре) каймалла. Час сýрёлмен отравляющи вещество тумламёсем çурт çине тата çурт таврашёнчи вырăна лекнё пулсан, пытанса убежищёне кёрсе ларнă çынсен убежище дежурнăйё е комендантчё ирёк памасăр та убежищёрен тухма пултараймаççё. Убежищёрен сиенленнё вырăн урлă утса тухмалли сукмаксене самозащита групписем е МПВО-н дегазаци тăвакан ăрасна командисем дегазацилесе хатёрлесе параççё. Час сýрёлмен отравляющи веществосемпе сиенленнё вырăнсене те çак командăсемех дегазацилесе тасатаççё.

Химилле тапăнуран сыхланма мёнпур халăха хатёрленни, хими тревогин сигналё пулсан харпăрхăйне мёнле тытмалли правилăсене пёлни, МПВО работникёсем мён хушнисене пурне те пурнăçа тёрёс кёртсе пыни,—çаксем пурте тăшман авиацийё химилле тапăнупа сиен кýнине чакарма, пётерсе лартма пулăшаççё.

Капитан Л. ШЕХИРОВ.